Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
ДЕКАБĔР
21
ЙУНКУН
291(5104) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 5—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—7—97, йалхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышленнăç пайĕн—0—85, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Колхозсенче тупăшсене валеçессине вăраха йамала мар

Колхозсенче ĕçкунĕ çине тивекен тупăшсене колхозниксене валеççе пама тата йалхуçалăх çулĕн чаплă итогĕсене тăвас тапхăрĕ вĕçленет. Йалхуçалăх çулĕн кăçалхи итогĕсем вĕсем уйрăмăнах паллă пулса тăраççĕ. Вăл итогсем колхоз стройĕ тĕреклении çинчен, колхозсемпе колхозниксем кăçал тырпул тухăçне хăпартас йенĕпе çĕнĕ çĕнтерӳсем тунине тепĕр хут çирĕплетеççĕ. Кăçал çанталăк йалхуçалăхĕшĕн килĕшӳлĕ пулмарĕ пулин те коммунисен партийĕ йертсе пынипе пирĕн республикăри колхозсем ĕçкунĕсем тăрăх валеçме пысăк тупăш турĕç. Колхозсем тунă çитĕнӳсем çинчен пайтах примерсем илсе кăтартма пулать.

Республикăра кашни ĕçкунĕ çине 5—6 килограм таран тĕштыра валеçекен колхозсем сахал мар. Акă Канаш районĕнчи Максим Горький йачĕпе тăракан колхозра кашни ĕçкунĕ çине 5 килограм çурă, Ишлей районĕнчи „Париж Коммунĕ“ колхозра 5 килограм таран тĕштыра валеçеççĕ. Йĕпреç районĕнчи „Х лет Октября“ колхоз ферминче ĕçлекен В. Краснов йулташ кăçал пĕр пăчĕнчен 440 пăт тыра илет. Иртнĕ çулта та вăл 432 пăт таса тыра ĕçлесе илнĕ пулнă.

Колхозсен тупăшĕ ӳссе пыни чăннипех колхозниксемпе колхозницăсене питех те хĕпĕртеттерекен факт. Укçалă тупăшсем ӳссси уйрăмăнах кăçал ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ „Колхозсенче тупăшсене тĕрĕс мар валеçни çинчен“ йышăннă постановленире пĕтĕм партипе совет организацисене колхозсен укçа хуçалăхĕ çине ытларах пăхма кирли çине кăтартса пани хыççăн вăйланчĕ. Ăна çак тĕслĕхсенчен те курма пулать. Улатăр районĕнчи „Х лет ЧАССР“ колхозра ĕçкунĕсем тăрăх 2 тенкĕ те 70 пус, „Красный Загурск“ колхозĕнче пĕр ĕçкунĕ çине 1 тенкĕ те 74 пус таран укçа валеçĕвет. Çав районри „Красная знамя“ колхоз членĕ Бугырский йулташ кăçал ĕçкунĕ тăрăх 112 пăт тыра, 558 тенкĕ укçан илет.

Йалхуçалăхĕн 1938 çулĕ вĕçленет. Вăхăт нумай йулмарĕ. Çак йулнă кунсемпе кашни колхозăн анлăн усă курни кирлĕ. Халĕх пур колхозсенче те вăйлă тырпулшăн, йышлă выльăх-чĕрлĕхшĕн çулталăк хушши кĕрешнĕ ĕçсен итогĕсене туса çитерес пулать. Халиччен государствă умĕнчи обязательствăсене (тыра тăратасси, натуралата тыррине тӳлесси т. ыт. те.) парса татман колхозсен хăйсен парăмĕсене çак кунсенчех тултарас пулать. Çакăнпа пĕр вăхăтрах, кашни колхозăн йалхуçалăх ертел уставĕ тăрăх тумалли фондсене хывса çитерме васкас пулать. Мĕншĕн тесен, тупăшсене кашни ĕçкунĕ çине вахăтра колхозниксене валеççе парасси пĕтĕмпех çав ĕçсене мĕнчул хăвăрт туса çитернинчен килет.

Пайанхи куна илсен, нумай районсенче тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх валеçесси питĕ çителĕксĕр пулса пырать.

Çак иртнĕ кунсенче ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ чылай районсене йатарласа бригадăсем йарса, колхозсенче тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх колхозниксене валеççе пама мĕнле хатĕрленнине тата колхозсенче йалхуçалăх ертелĕн Сталинла уставне мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслерĕ. Бригадăсем тĕрĕслесе килнĕ материалсем мĕн çинчен калаççĕ-ха? Бригадăсем пулнă районсенче партипе совет организацисем колхозсене кулленхи ĕçре конкретлă йертсе пыманни уççăнах курăнчĕ. Нумай колхозсенче Сталин йулташ колхозăн общĕствăлă интересĕсемпе колхозниксен хăйсен интересĕсене тĕрĕс çыхăнтарса пыма кирли çинчен кăтартса панисене пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. Колхозсенче халиччен йалхуçалăх ертел уставĕн 15-мĕш пунктне тупăшсене валеçнĕ чухне пурнăçа кĕртмеççĕ. Нумай колхозсенче колхозниксем ĕçлесе илнĕ ĕçкунĕсене ĕç кĕнекисем çине вăхатра лартса памаççĕ. Колхоз правленисем колхозниксене колхоз уставĕ тăрăх ĕçлеме вĕрентсе пырас вырăнне ăна тӳсме çук пăсаççĕ. Акă Вăрмар районĕнчи Кивĕ Вăрмарти „Большевик“ колхозра тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх колхозниксене валеççе памалли ведомăçе тунă чухне иртнĕ çултан йулнă 611 центнĕр тырăна пачах шута илмен пулнă. Çав колхозрах хĕле кĕнĕренпе 2 пин центнĕр таран выльăх апачĕ расхутланă. Çав районрах Еатри Пасар йалĕнчи колхозра вăрлăхлăх уйăрса хунă тырăсем çине тасатман тырăсем хурса хутăштарнă. Колхоз председателĕ Васильев йулташ ĕçкунĕсем тăрăх валеçмелли тырăран нимпа калесса килĕшмесĕрех 10 центнĕра йахăн тыра сутнă.

Паллах, пур колхозсенче те ревизи комиççисем хăйсен тивĕçлĕ ĕçĕсене устав хушнă пек тӳррĕн туса пынă пулсан, çак çулте ысăнна кирлĕ мар ĕçсене çийĕнчех тӳрлетме май пулнă. Колхозсенчи ревизи комиççисен умĕнче тăракан пайанхи задачă вăл колхозсем çулталăк хушши мĕнле ĕçленине ревизи тăвасси пулать. Çак ĕçе вăрăма йамасăр халех туса ирттермеле.

Анланас пулать: устава пăсни вăл колхоза вăйсăрлатасси патне, колхозниксен ĕçкунĕсем тăрăх валеçĕнекен тупăшне чакарасси патне илсе пырать, колхозниксем хушшинче кăмăлсăрлăх кăларать. Устава пăсни çине тĕрĕс мар, большевикла мар пăхнине, тимсĕррĕн пăхас практикăна татăклăн тата хытăн сивлемеле.

Йалхуçалăх ертелĕн Сталинла уставĕ — большевикла колхозшăн, пуйан та культурлă пурăнакан колхозниксемшĕн кĕрешмелли хăватлă оруди. Ăна пурнăça кĕртсе пырса пирĕн республикăри колхозсем тырпул тухăçлăхне хăпартас, выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерес йенĕпе пысăк çитĕнӳсем турĕç. Колхозниксен ĕçкунĕ çине валеçĕнекен тупăшĕ те пысăк. Çав тупăша пĕтĕмпех устав хушнă пек ĕçкунĕ тăрăх çеç тата вăхăтра валеççе парас пулать.

Колхозсенче тупăшсене валеçесси — пысăк та ответлă ĕç. Тупăшсене тĕрĕс валеçни колхоз стройне малалла тĕреклетме, колхозниксене малашне çĕнĕ тата чаплăрах çĕнтерӳсем тума мобилизацилеме пулăшать.

Аслă летчике асăнса

Кинохроникăн Мускаври Студийĕ „Аслă летчике асăнса“ йатлă документлă фильм туса пĕтерчĕ.

Фильмăн пĕррĕмĕш çур пайĕ Валерий Павлович Чкаловăн мухтавлă пурнăç çулĕ çинчен, вăл сывлăш стихийĕпе паттăррăн кĕрешни çинчен каласа парать. Фильма пăхакансем 1935 çулхи майăн 2-мĕшĕнче Фрунзе йачĕпе тăракан тĕп аэродром çинче Сталин йулташ Чкаловпа тĕл пулнине, Мускав—Чкалов утравĕ вĕçĕвĕн стартне, Мускав—Çурçĕр полюсĕ—Çурçĕр Америкă вĕçевĕн стартне кураççĕ.

Фильмри чылай вырăнсенче Валерий Павлович Атăл çинчи хăй çуралнă Василёва Слободара пулнине кăтартса парать.

Фильм Чкалов йулташăн—ССРС Верховнăй Совет депутачĕн государствăлă ĕçĕсемпе паллаштарать.

Фильмăн иккĕмĕш çур пайĕ пĕтĕм халăх хурланнă куна, Мускаври ĕççыннисем аслă летчикпе ĕмĕрлĕхе уйăрăлнине, В. П. Чкалова пытарнине тата Хĕрлĕ площадьри траурлă митинга кăтартса парать.

(ТАСС).

ПСК(б)П Свердловск Обкомĕн пленумĕ

Декабĕрĕн 15—18-мĕшĕсенче ПСК(б)П Свердловск Обкомĕн III-мĕш пленумĕ пулса иртнĕ. Унта ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ парти пропаганди çинчен йышăннă постановленине практикăла пурнăçа кĕртсе пыни çинчен доклад итленĕ. ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн постановленине чылай парторганизацисенче халĕ те коммунисене ăнлантарса паманни палăрнă.

Унтан пленум „Уралуголь“ комбиначĕн ĕçĕсем çинчен доклад итленĕ. Пленумра пулнисем комбината тата унăн управляйушчине Смирнов йулташа, канцелярлă-бӳрократла киревсĕр методпа йертсе пынăшăн, шахтерсен культурăлла йăла ыйтăвĕсем çине тивĕçлипе пăхманшăн, тăрăшмачăшăн тата производствăри дезорганизаторсем çине либералла пăхнăшăн хытă критиклерĕ. Кăçал вунă уйăх хушшинче „Уралуголь“ шахтисенче ĕçлеме 17 000 çын илнĕ, çавăн чухлех ĕçрен тухса кайнă.

(ТАСС).

„Штурм перекопа“ панорамă выставкинче 500.000 çын пулнă

Мускаври А. С. Пушкин йачĕпе тăракан изобразительнăй искусствă музейĕнче Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Хĕрлĕ Флочĕ XX çул тултарнă йатпа организациленĕ выставка хупăннă. Ку выставкăра „Штурм перекопа“ панорамăн художествăлă макечĕсем пулнă.

Вунă уйăх хушшинче выставкăна 500 000 çын ытла, 14.395 экскурсисем пырса курнă.

„Штурм перекопа“ выставкăна Ленинграда куçараççĕ.

(ТАСС).

Колхозсенчĕ çулталăкри отчотсене çырас йĕрке

ССРС Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ колхозсенче çулталăкри отчотсене çырас йĕркене тата отчот кампанийĕ срукĕсене туса çирĕплетнĕ. Колхоз правленийĕ çулталăк отчочĕсене çырассине колхозсенчи ревизи комиççийĕсем колхозсен пĕтĕм хуçалăхĕ мĕнле тăни çинчен документсем тăрăх тĕплĕн ревизи тăвассине килес çулхи йанварĕн 10-мĕшĕнчен кайа йулмасăр туса ирттермеле. Йанварĕн 17-мĕшĕнче кайа йулмасăр отчота йалхуçалăх ертелĕн пухăвĕнче пăхса тухса çирĕплетмеле, вăл пухура ертел членĕсен виç пайĕнчен икĕ пайĕ кайа мар пулмала.

(ТАСС).

Совет Сойузĕ тăрăх

**Днепропетровскри Дзержинский йачĕпе тăракан саватра кăçалхи çул 2 000 ытла рационализаторла сĕнӳсем пулнă, вĕсенчен 1.236 сĕнĕвне йышăннă, 711 сĕнĕвĕпе ĕçре усă курнă. Çапла тунипе савăт 2,5 мĕлйун тенке йахăн перекетлесе хăварнă. Авторсене 90 000 тенкĕ премии панă.

** Винница облаçĕнчи йалсенчи уйрăм заказсем тăрăх тумтир çĕлекен тата йусакан мастерскойсем кăçалхи çул колхозниксене тĕрлĕ заказсем тăрăх 5 440 пин тенкĕлĕх тумтир çĕлесе панă. Атă-пушмак тавраше йусама йалсенче 618 мастерской уçнă. Металлран тунă йапаласене йусамалли мастерскойсем организацилеççĕ.

** 1936 çулхи йанварĕн 1-мĕш тĕлне Приморйе облаçĕнчи (Инçет-Хĕвелтухăç) перекет кассисенчи вкладсен сумми 42 мĕлйун тенкĕ пулнă, 1938 çулхи йанварĕн 1-ш тĕлне вăл 77 мĕлйун тенке çитиуснĕ, декабĕрĕн 10-мĕш тĕлне — 100 мĕлйун тенкĕ ытла пулнă. 125 000 çын хăйсен перекетленĕ укçисене перекет кассисенче сыхласа усраççĕ.

** Минск облаçĕнчи Червенск районĕнче Белорусс СС Республикĕнчи Осоавиахим Тĕп Совечĕн снайперсен республикăри пĕррĕмĕш шкулне тума пуçланă.

(ТАСС).

Пысăк тупăш илекен колхозсем

Кăçал Аджаринчи (Грузи ССР) колхозсен тупăшĕ мĕлйуншар, çĕршер пин тенкĕ шутланать. Ворошилов йачĕпе, Молотов йачĕпе тăракан тата „Хĕрлĕ Октябер“ колхозсем виççĕшĕ 6 мĕлйун тенкĕ тупăш илеççĕ.

Бобоквати йалĕнче Молотов йачĕпе тăракан колхозра 1500—2000 ĕçкунĕ тунă çемйесем пур. „Хĕрлĕ Октябер“ колхозăн тупăшĕ 800 пин тенкĕрен иртет. Вăл колхоз ĕçкунĕ çине укçан кăна вунпилĕкшер тенкĕ валеçет. Колхозник Осман Партенадзе йулташ хăй тунă ĕçкунĕсем çине укçан 12 пин тенкĕ илет.

Колхозниксем пуйан тупăш илнĕ май çĕнĕ чул çуртсем, колхозсем електростанцисем лартаççĕ.

(„Заря Востока“).

Китайăн геройла халăхĕ Йапони захватчикĕсене хирĕç кĕрешме хăйĕн вăйĕсене мобилизацилет

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: госпитальре сурансене сыхаççĕ.

(Бюро-клише ТАСС).

Çĕрмамăк уйхирĕ çине искусственнăй çăмăр çутарни

Гидротехнически сооруженисем хатĕрлес йенĕпе ĕçлекен Государственнăй трест (Гидропроиз) експедицийĕ Азербайджанри çĕрмамăк уйхирĕсенче искусственнăй çăмăр çутарас тĕлĕшпе опытсем туса ирттернĕ.

Гидропроиз хатĕрленĕ çăмăр çутаракан аггрегата: „ЧТЗ“ дизеллĕ трактăр, насус тата куçарса лартмала трубасем кĕреççĕ. Трубасем çине шыва сирпĕтекен аппаратсем 6—7 штук таран лартнă, вĕсем хăйсен тĕнĕлĕ тавра çаврăнаççĕ.

Сальйан районĕнчи Берийа йачĕпе тăракан колхозра експедици Йегипет çĕрмамăкĕ акнă икĕ пĕр пек участкăсем çинче опыт тунă. Пĕр участкинче çĕрмамăкне искусственнăй аппаратсемпе шăварнă, тепĕр участкинче — каналсем тăрăх шыв йарса шăварнă.

Искусственнăй майпа шăварса тăнă участка çинче çĕрмамăкĕ 15 кун маларах çитĕнме пуçланă. Çакăн пек малтан çитĕнни пĕррĕмĕш сортлă çĕрмамăкĕ ытларах илме тата ăна уйхиртен ирттерех пуçтарса кĕртме май панă. Çак участка çинчен çĕрмамăкĕ 9,6 центнĕр илнĕ, канавсем тăрăх шыв йарса шăварнă участка çинчен пурĕ те 2,1 центнĕр çеç илнĕ.

(ТАСС).

ПĔЛТЕРНИ

Пайан, декабĕрĕн 21-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре, Строительсен клубĕнче Шупашкар хулинчи парти активĕн пухăвĕ пулать.

Кун йĕрки:

1. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн II-мĕш пленумĕн итогĕсем çинчен.— Докладчик Лапин йулташ.

Пухăва пропуска тăрăх кĕртеççĕ. Пропускăсене партком секретарĕсемпе парторгсен ПСК(б)П хула комитетĕнче илмеле.

ПСК(б)П хула комитечĕ.

Судет облаçĕ Гитлĕр ури айĕнче

Судет облаçне фашисла Германи туртса илнĕ хыççăн, облаçри економикăла лару-тăру хытă начарланса, промышленнăçпа культура чакса, ĕçсĕр тăрса йулнисен шучĕ ӳссе пырать. Германи статистикин официаллă цифрисем тăрăх пăхас пулсан та, облаçра ĕçсĕр тăрса йулнисен хисепĕ 196 пин çынна çитнĕ, вĕсенче 71.000 хĕрарăм. Çар укрепленийĕсене тунă çĕре ĕçлеме кайма килĕшмен вуншар пин рабочисене, тискер експлоатацине чăтаймасăр йалсенчен тухса тарнă вуншар пин батраксене фашиссем ĕçсĕр тăрса йулнисен спискине кĕртмеççĕ, вĕсене шута илсен вара ĕçсĕр тăрса йулнисен хисепĕ тата пысăкрах пулни курăнать.

Ĕçлекеннисен пурнăçĕ те çавăн пекех начарланса пырать. Апатçимĕç хакĕсем татти-сыпписĕр ӳссе пыраççĕ, хăшпĕр таварсем пасарсенчен йалтах çухалнă. Йанварĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Судет облаçĕнчи пур предприйатисенче те кунне 10 сехет ĕçлемелле тăваççĕ. Ĕçукçи пĕрмайах чакса, ĕçкунĕ вăрăмланса пырать.

Халăх массисен фашисла варварсен режимне хирĕçле кăмăлĕ ытларан-ытларах ӳссе пырать. Хăйсем захватчиксене курайманнине ĕççыннисем уççăнах палăртаççĕ. Фашиссем чехсене „çĕнĕ тăван çĕршывпа“ килĕштерме тăрăшнинчен нимĕнле ăнăçлăх та пулмасть.

Декабĕрĕн 4-мĕшĕнче Судет облаçĕнче Германи рейхстагне (парламент) хушса „суйланă“. Облаçри чехсем тĕпрен илсен гитлĕрăвçсене хирĕç сасăланă.

Глубочице йалĕнче (Моравй) суйлав участки вырнаçса тăнă çурта виçĕ штурмовик пынă, вĕсем йалти çынсем 400 бӳллетен йанă йешчĕксене илсе кайма хăтланнă. Нумай çынсен ушкăнĕ штурмовиксем çине тапăннă. вĕсенчен бӳллетенсен йешчĕкĕсене туртса илнĕ, фашиссен ирĕксĕрех сасăсене суйлавçăсен умĕнче шутламала пулнă. Вăрă 10 çын çеç фашиссемшĕн сасăланни палăрнă. Çакăн хыççăн йала штурмовиксен отрйачĕ пырса çитнĕ, йешчĕксене вăйпах туртса илнĕ. Тепĕр кунне вара йалти çынсем çиллене тарăхса, çакăн çинчен пĕлеççĕ: фашиссем суйă ĕç тунă, вĕсем официальнăй таблицăра, фашиссене хирĕç 10 сасă панă, ыттисем пурте фашиссемшĕн сасăланă, тесе пĕлтернĕ. Фашисла „суйлавсен“ сан-сăпачĕ çакăн пек ĕнтĕ.

Ĕççыннисен массисем фашисла йĕркене калама çук ылханаççĕ. Декабĕрĕн 11-мĕшĕнче Тырн хулинчи центрти площадьре „Облаçе кайăла Чехословакине таврса пама ыйтатпăр“ текен пысăк плакат çырса хунă.

Тепĕр кунне хулара темиçе тесетке çынна арестленĕ.

Нумай ĕççыннисем—нимĕççем те, чехсем те—Мускавран паракан радиопередачăсене пĕрмайах итлеççĕ, çакăншăн айăпласа, пĕтĕм облаç тăрăх массăлă арестсем туса иртерне.

(ТАСС).

Словаки парламентне „суйлани“

Декабĕрĕн 18-мĕшĕнче Словаксен автономнăй парламент „суйлавĕ“ пулса иртнĕ.

Вăрттăн суйламалли йĕрке пачах пулман. Халăх суйлавпа нимĕн чухлĕ те интересленмен. Суйлава вĕсем суйлава тухманшăн саккун тăрăх штраф тӳлемеле пулнăран çеç тухнă. Фашисла террора пула тата суйлав вăхăтĕнче халăха хытă хĕстернийĕ пула, Словакири фашиссен партийĕ „абсолютнă ытларахĕш“ сасă илнĕ.

(ТАСС).

Чехословаки правительстви Германи фашисăмĕн агентурине çĕнĕрен уступкăсем панă

Нимĕçсен Чехословакири „национал-социалисла“ партин (Генлейн партийĕ пулнăскерĕн) пуçлăхĕ Кундт йулашки еррне хушшинче Чехословаки президенчĕпе—Гахăпа тата премйер-министрăпа—Беранпа Чехословакире пурăнакан нимĕçсене „правасем парасси çинчен“ калаçнă. Чехословаки правительстви Кундт тăратнă требованисене пурнăçа кĕртме килĕшнĕ. Вăл требованисем çапла:

1. Чехословакире нимĕçсен пĕр организаци — „национал-социалисла“ организаци пулмала, вăл Германири организаци йĕркелĕ тата унăн штурмовой отрйачĕсем пулмала.

2. Нимĕç шкулĕсене фашисăмла майлă çĕнетсе тухмала.

3. Чехословакири нимĕç фашисăсене „расслă принципла“ тата Германин йеврейсене хирĕçле саккунĕсемпе усă курма ирĕк памала.

4. Чехословакире фашисла Германин государственнăй флагне çакма, çавăн пекех Германин фашисла организацин значокĕсене çакса çӳреме ирĕк памала.

Чехословаки правительстви Германи фашисăмĕн агентурине çакăн пек уступкăсем пани Чехословаки çĕршывĕнчи халаха тарăхтарса йанă.

(ТАСС).

Суец каналĕ

(Справкă)

Фашисла Итали халĕхи вăхăтра хăйне Суец каналне туртса тăрас ĕçе хутшăнтарма тата Суец каналĕ тăрăх иртекен Итали карапĕсенчен илекен тариф укçине чакарма требовани лартать. Итали требовани хутне Германипе Йапони кĕреççĕ.

Суец каналне 1869 çулта тунă. Вăл питĕ пысăк сооружени. Унăн тăршшĕ 164 километр, сарлакĕшĕ 60 метр. Вăл Вăтаçĕр тинĕс çинчи Порт-Саида Хĕрлĕ тинĕс çинчи Суецпа пĕрлештерет. Суец каналне уçиччен, Йевропăран Инди океанне кайакан карапсен Африкă тавра çаврăнмала пулнă. Канала уçнă хыççăн кар псем Вăтаçĕр тинĕсрен тӳрех Инди океанне тухаççĕ.

Суец каналне „Суец канал компани“ тытса тăрать. Компани акцийĕсенчен 44 проценчĕ Англи правительствин аллинче. Ытти пайĕсем, пуринчен ытла, Франци аллинче тăраççĕ.

1932 çулта Суец каналĕ тăрăх пурĕ 5 032 коммерчески тата çар карапĕсем иртнĕ, 1936 çулта — 5.877 карап. Суец каналĕ тăрăх грузсем турттарас ĕçре малти вырăнта Англи тăрать.

Суец каналĕ тăрăх судйисем çӳрессине 1888 çулта Англи, Франци, Российа, Австро-Венгри, Германи, Испани, Итали, Голланди, Турци алă пусса çирĕплетнĕ пĕтĕм тĕнчери килĕшӳ тăрăх йĕркелесе тăраççĕ. Çак килĕшӳ тăрăх, канал вăрçă вăхăтĕнче те, мирлĕ вăхăтра та пур çут-илӳ судийĕсемпе çар карапĕсемшĕн çӳреме усă пулмала.

Канал Англипе Францишĕн уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çак канал урла Англипе Франци хăйсен Африкăри, Азири колонисемпе çыхăнса тăраççĕ.

Суец каналне уçнă пирки Вăтаçĕр тинĕсĕ тĕнчери тинĕс çулĕсен çисгемине кĕнĕ. Вăл йĕри тавра Англи колонийĕсем хупарласа тăракан Инди океанĕпе çыхăннă. Паллах, Суец каналне тытса тăрас ĕçе Итали хăй аллине илесмĕн пулсан, Британи империйĕ тытăнса тăрас тĕлĕшрен питĕ пысăк хăрушлăх тухса тăма пултарать.

(ТАСС).

755 пин тенкĕ тӳленĕ

КУСЛАВККА. Нумай çемйелĕ ача амăшĕсене государствă йенчен пулăшу памала тăвасси çинчен саккун тухнăранпа, районра 197 нумай çемйелĕ ача амăшĕсене 755 пин тенкĕ государствă укçа панă. Саккун тухнăранпа Хурамалти И. Н. Бельйаева 12 пин тенкĕ, Воробйовкари Е. М. Коробльова 10 пин, Чăнкассинчи О. Е. Красильникова 10 пин, Елменкассинчи М. Н. Тимуршина 8 пин, Варасăрти Е. С. Мишуткина 8 пин тенкĕ илнĕ.

А. З.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Çамрăк коммуниссене политикăла воспитани парас ĕç

Партин Йĕпреç районĕнчи организацийĕ кашни çын çине уйрăмăн пăхас метăда çирĕп астуса, партине çĕнĕрен илмеле тунӑран вара парти членĕн кандидатне 62 çынна илчĕ, кандидатран парти членне 16 çынна куçарчĕ. Вĕсем парти ĕçĕшĕн, халăх ĕçĕшĕн чăнкипех чĕререн тăрăшса ĕçлекен, производствăра та, общĕствăлă ĕçре те малта пыракан çынсем.

Партине çĕнĕрен илнĕ çамрăк коммуниссем парти райкомĕнчен хăйсене большевикла вĕрентсе çитĕнтерме ыйтаççĕ. ПСК(б) Парти ретне кĕни çын пурнăçĕнчи пысăк событи. Коммуниссен парти хăйĕн ретĕнче çынсене дисциплинăна çирĕп пăхăнакан, массăсен организаторĕ пулма вĕрентсе çитĕнтерет. ПСК(б)П уставĕ кашни коммуниста парти тата государствă дисциплинине çирĕп пăхăнма, партипе çĕршывăн политикăлă пурнăçне активлăн хутшăнма, парти, парти органĕсем йышăннă решенисене ĕçре пурнăçа кĕртме, хăйĕн идейăлă пĕлÿне йалан ÿстерсе пыма хушать.

Парти Тĕп Комитечĕ тата Сталин йулташ хамăрăн кадрсене, партири тата партире мар кадрсене идейă тĕлĕшĕнчен хĕçпăшаллантарма кирлĕ чи паха кĕнеке — „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" пачĕç. Пирĕн çамрăк коммуниссем хăйсен большевикла партин историне, стратегипе тактикине вĕренме кирлине ăнланса илеççĕ. Анчах та парти райкомĕ çамрăк коммуниссене марксисăм-ленинисăм теорине вĕрентсе большевикла воспитани парас йенĕпе кирлĕ пек ĕçлесе пыраймасть-ха.

Сталин йулташ пирĕн кадрсем йăвăрлăхсене хирĕç, кĕрешсе вĕсене çĕнтерсе, тăшмансене хирĕç кĕрешсе çирĕпленеççĕ тесе темиçе хутчен те кăтартса панă. Çакна асра тытса епĕр çамрăк коммуниссене парти, государствă тата общĕствăлă ĕçсене активлăн хутшăнтарма тăрăшатпăр. Çамрăк коммуниссене конкретлă ĕçсем паратпăр, вĕсене хушнă ĕçсене пурнăçлама пулăшатпăр.

Çамрăк коммуниссем парти ĕçне йуратса туса пынине, ответлăха туйнине, хăйсен пĕлÿне ÿстерме тăрăшнине кăтартаççĕ. Çамрăк коммуниссене парти ĕçне хутшăнтарсан вĕсем ÿсе пыраççĕ. Çапла пирĕн парторганизацийĕнчен В. М. Макçимăв йулташ Коммунисла Йалхуçалăх асла шкулне вĕренме кайрĕ, районра агроном пулса ĕçленĕ Н. Ф. Смолянăв йулташа ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн аппаратне ĕçлеме илчĕç.

И. И. Орлов йулташ — çамрăк коммунис, вăл рйадовой колхозник пулнă, хăй ĕçлеме те, вĕренме те, дисциплинăна тытма пултарнине те кăтартрĕ. Халĕ ăна парти райкомĕ хăйĕн аппаратне ĕçлеме илчĕ, кунта та хăйĕн ĕçне лайăх туса пырать. Е. М. Шалиганăв сочувствуйушчинче, унтан кандидатра тăрса политикă тĕлĕшĕнчен нумай ÿсрĕ. Халĕ вăл Леспродторг председателĕн заместителĕ пулса ĕçлет.

Кунашкал примерсем, парти райкомĕ çамрăк коммуниссене воспитани парса ĕçре пиçĕхтернĕ тĕслĕхсем чылайах пур. Анчах та вĕсем парторганизаци çамрăк коммуниссене воспитани парас ĕçе питĕ лайăх йĕркеленине мухтанма тивĕç памаççĕ. Çамрăк коммуниссене большевикла воспитани парас йенĕпе нумай ĕçлемеле.

Партине илес ĕçри хăшпĕр чăрмавсем çинчен. Парти Обкомĕн йертсе пыракан парторгăнсен пайĕ райкомсем партине илнĕ йулташсен ĕçĕсене пăхса тухассине вăрăма тăсать. Пĕр пирĕн парторганизаци кандидата илнĕ çирĕм ĕçе, члена куçарнă тăвата ĕçе халĕ те пăхса тухман. Парти райкомĕ Краснов йулташа нăйабĕн 10-мĕшĕнче парти членĕн кандидатне илчĕ, анчах унăн ĕçне Обкомра халĕ те пăхса тухман.

Партин боевой резерви — ленинла комсомолăн пирĕн районри организацийĕ хăйĕн ретĕнче 850 çынна ытла пĕрлештерет. Партине çĕнĕрен илме тытăннăран вара епĕр 37 комсомолеца çеç парти ретне илнĕ. Кунта ПСÇЛКС райкомĕ хăй те айăплă. Вăл комсомолецсене конкретлă ĕçсем парса ĕçре çирĕплетес, вĕсене большевисăмпа хĕçпăшаллантарас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет.

Районри парторганизаци çамрăк коммуниссене большевикла воспитани парас, ĕçре пиçĕхтерес, политикă тĕлĕшĕнчен шăнчăклă, хăйсене ĕçре кăтартнă, пур ĕçре те малта пыракансене парти ретне илес тĕлĕшпе нумай ĕçлеме тивет. Халĕ парторганизаци хăйĕн ĕçне çаксене шута илсе туса пырать те.

Медникăв.

ПСК(б)П Йĕпреç райкомĕн çекретарĕ.

Куславкка райкомĕн сÿрĕклĕхĕ

Партин Куславкка райкомĕ коммуниссен районри пухăвĕсене йаланах хăтĕрленмесĕр иртерни, пысăк ыйтусене сÿтсе-йавас ĕç çине çийелтен пăхни çинчен „Чăваш Коммунĕ" хаçатра çырнăччĕ*).

Çакăнтан парти райкомĕ тивĕçлĕ вывăд тумарĕ. Çапла, райком декабĕрĕн 6-мĕшĕнче районри интеллигенцине пухса, парти Тĕпкомĕ нойабĕрĕн 14-мĕшĕнче йышăннă постановленине ăнлантарса пама палăртнă. Анчах çак пысăк ĕç çине райком çийелтен пăхнă. Пуху пулмали клуба вут хутса ăшăтман, тÿсме çук сивĕ. Пуху пулассин çинчен интеллигентсене чылайĕшне пĕлтермен.

Пухура доклад тума Липатăв йулташа уйăрнă. Вăл пухува вăхăтра пымарĕ, пĕр сехет кайа йулса пычĕ. Докладчик килессе кĕтсе районри çутĕç пайĕн тата учителсен сойузĕн представителĕсем пĕр сехет хушши тĕрлĕ ĕçсем çинчен каласа пачĕç.

Вăхăт нумай иртрĕ. Доклад пĕтнĕ çĕре каç пула пуçларĕ. Липатăв йулташ васкать... Çакна пула пуху резолюци те йышăнмарĕ, районри çутĕç пайне хушса хăварчĕ. Пысăк та ответлă ĕç çине çийелтен пăхассине пĕтерме вăхăт Куславкка райкомĕн!

Н Мраньпа.

* 1938 çулти декабĕрĕн 4-мĕшĕнче тухнă номĕре пăхăр.

Районри интеллигенци пухăвĕ

СЕНТĔРВĂРРИ. Декабĕрĕн 18-мĕш. (Телефонпа). Декабĕрĕн 17-мĕшĕнче совет интеллигенцин районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура парти Тĕпкомĕ „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" кăларнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен" йышăннă постановлени çинчен доклад итлерĕç.

Доклад хыççăн прение 16 çын тухса каларĕç. Сĕнтĕрвăрри пульницинчи врач Виноградăв йулташ хĕрÿлĕ сăмах каларĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче парти историне вĕренесси кашни совет интеллигенчĕн чыслă ĕçĕ пулса тăмалла, терĕ.

Хуракассинчи вăтам шкул учителĕ Йакăвлĕв йулташ хăшпĕр çĕрте совет интеллигенцине хисеплеменнине палăртрĕ. Хуракасси йалсовечĕ учителсене общĕствăлă ĕçе хутшăнтарманни, йалсовет пленумĕсене халăх пухăвĕсене чĕнменни çинчен каларĕ.

Интеллигенцин районри пухăвĕ парти Тĕпкомĕн постановленине мрларĕ тата интеллигентсен хушшинче парти пропагандине йĕркелесси çинчен решени йышăнса хăварчĕ.

Пухура 400 çынна йахăн пулчĕç. Пуху хыççăн пĕррĕмĕш колхоз театрĕ концерт пачĕ.

Пр. Сятур. В. Ивле.

Пуху конкретлă решени йышăнчĕ

Çак кунсенче Йелчĕкре районри коммуниссен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн II-мĕш пленум решенийĕсем çинчен доклад итлесе сÿтсе-йаврĕ.

Пуху государствă умĕнчи парăмсене, хуçалăх задачисене декабĕр уйăхĕнче вĕçлесе пĕтерес тесе конкретлă решени йышăнчĕ.

Н. Волкăв.

Харпăрхăй тĕллĕн вĕренеççĕ

Çак кунсенче Канашри вакунсем йусакан савăтри интеллигентсен пухăвĕ пулса иртрĕ.

Пуху „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" кăларнă май парти пропаганди ĕçне йĕркелесси çинчен" ПСК(б)П Тĕпкомĕ йышăннă постановленине сÿтсе йаврĕ.

Интеллигентсенчен 89 çын ПСК(б)П историне хăйсем тĕллĕн вĕренме тытăннă.

С. Филиппăв.

Çулталăк планне тултартăмăр

Шупашкарти „Крестьянин" вăрман савăчĕ кăçалхи çулталăк планне 137 процент тултарнă.

Савăт дирекцийĕ çулталăк планне срукчен тултарнă май стахановецсемпе ударниксене пурĕ 22 çынна хаклă премисемпе парнелерĕ.

Производствăра лайăх ĕçлекенсенчен уйрăмăнах М. Антонăв (токăр), П. Лукойанăв (машинист), П. Чернов (рамщик), А. Жирков (çменă мăçтăрĕ) йулташсене палăртмала. Вĕсем производствăра кăна мар, хăйсен пĕлĕвĕсене ÿстерес йенĕпе те пример кăтартаççĕ. Вĕсем пурте пирĕн савăтра 1926 çултанпа ĕçлеççĕ.

Долговă.

„Крестьянин" савăт директорĕ.

Производствăри ÿсĕмсем

Шупашкарти Водопйанăв йачĕпе тăракан тир-сăран комбинатĕнчи рабочисем çĕнĕ çула кĕтсе илнĕ май производствăра çĕнĕ ÿсĕмсем тăваççĕ. Ленин йачĕпе тăракан бригадă членĕ Н. Калентйăв йулташ ку таранччен нормăна шăпах тултарса пынă, декабĕрĕн 17-мĕшĕнче вăл 210.9 процент тултарчĕ.

Мартăн 8-мĕшĕ йачĕпе тăракан бригадă членĕсем те аван тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Акă П. Скачковă, Йекатеринина йулташсем икшер нормă ытла, раскройнăй цехри М. Йефимăвă йулташ 260 процент тултараççĕ. Декабĕрĕн 17-мĕшĕнче Скачковă йулташ плана 230,9 процент тултарчĕ.

И. Федăрăв.

Транспăрт йапăх ĕçлет

Куславкка комбиначĕ промфинплана ăнăçлăн тултарса пыманни транспăрт йапăх ĕçленинчен те килет. Цехсене вăхăтра материал тăратмасан, паллах, рабочисен простой пулать.

Кунта транспăрт ĕçне лайăхлатма майсем çук мар. Комбинатăн вунă автомашинă пур. Анчах тăваттăшĕ çеç ĕçлеççĕ, ыттисем хăшĕ çĕмрĕк, йе пайĕсем çук пирки ахаль лараççĕ.

Йулашки вăхăтра транспăрт йапăх ĕçлени уйрăмăнах вăл паракан станцине пысăк чăрмав кÿрет.

Комбинат дирекцийĕ малашне те машинсене ахаль тăратма шутлать-ши?

Г. Кузнецов.

Продавецсен паха ĕçĕсем

Тутаркас районĕнчи Мăн Сĕнтĕр йалповĕн продавецĕсем пĕрпĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Çавăн пек ĕçленипе йалпо çулталăк планне декабĕрĕн 1-мĕшне 101 процент тултарчĕ.

Уйрăмăнах продавщицă Кăçйанăвă тата продавец Карйагин йулташсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем çулталăк планне 310 процентшер тултарчĕç. Çăкăр сутакан продавщицă Ивановă йулташ та хăйĕн планне 126 процент тултарчĕ.

Пр. Йаркуньпин

Производствăă дезорганизатăрĕсене-прогульщиксемпе летунсене хĕрхенмеле мар

Типографинче прогульщиксемпе летунсем çине килĕшÿлĕн пăхаççĕ

Совет Сойузĕнчи предприйатисенчи стахановецсемпе ударниксем, рабочисем, служащисем тата профсойуз работникĕсем „Правда" хаçат çине государствă укçи-тенкине прогульщиксемпе летунсенчен упрасси çинчен çыраççĕ. Вĕсем социалисăмла ĕç дисциплинине çирĕплетме тăтăклă сĕнÿсем пăраççĕ. Çак ыйтăва пуçарни калама çук вырăнлă тата вăхăтлă.

Пирĕн Шупашкарти 1-мĕш номĕрлĕ типографинчи рабочисемпе инженерла-техникла работниксен коллективĕ хăйĕн пĕлĕвне, пултарулăхне государствă планне тултарнă çĕре парать. Анчах тÿрĕ ĕçлесе пыракан рабочисем хушшинче прогульщиксем, летунсем тата кахалсем те тĕл пулаççĕ. Вĕсем тĕрлĕрен сăлтавсемпе ĕçрен пăрăнса пыраççĕ, ĕçлемесĕрех пысăк укçа илме хапсăнаççĕ. Вĕсем отпускшăн йе чирленĕ вăхăтшăн паракан пулăшăва тÿрĕ ĕçлекен рабочисемпе пĕр тан илсе тăраççĕ. Акă пĕр тĕслĕх: иртнĕ çулла пĕр П. Йатлă рабочи урамра чарусăрланнă чух аллине мăкăлтаса пăрахнăччĕ. Алă тÿрленеччен уйăх çурă йахăн бульнитпе çÿрерĕ. Çав вăхăтшăн вăл укçине 100 процентпех илсе тăчĕ.

Тата Абрамăв наборщике пирĕн типографирен çулталăк хушшинче виçĕ хутчен кăларса йачĕç. Кашниччех... ÿсĕрпе темиçешер кун ĕçе тухмашăн кăларма тивнĕ. Халĕ вăл татах ĕçре, пулăшусене ытти рабочисемпе пĕр тавах илсе тăрать. Çакна тĕрĕс теме май пур-и? Пирĕн шутпа, ку йĕрке тĕрĕс мар.

Пирĕн типографинче ачалă арăмсем сахал мар. Пурте пĕлеççĕ, ача-пăча ÿстерни пирĕн çĕршыври чыслă ĕç пулса тăрать. Ача амăшĕсене пирĕн государствă пысăк пулăшусем парать.

Анчах хăшпĕр хĕрарăмсем çак майпа пăлахайа пеме пăхаççĕ. Федăрăвă наборщицă çулталăкра миçе кун ĕçленипе миçе кун ĕçлеменнине илсе пăхсан, ĕçлемен кунсем унăн 60 процента çитеççĕ. Мĕн пирки ĕçе тухмасть тетĕр пуль? Унăн пĕчĕк ача пур, анчах хăйĕн ачине вăл йĕркелĕ пăхмасть. Ачи чирлесенех ăна ĕçрен хăтармали хут параççĕ. Вăл хут тăрăх профсойуз комитечĕ ăна укça тÿлесе тăрать. Тепĕр работницă кĕркуннехи йĕпесапа çанталăкра ĕçкĕре пулса ачине чирлеттернĕ. Ăна та пирĕн профсойуз комитечĕ сăмах шарламасăр укça тÿлерĕ.

Çак тĕслĕхсем мĕн çинчен калаççĕ-ха? Вĕсем ку таранччен ĕç тата социалă страховани саккунĕсем кивелни çинчен калаççĕ. Тÿрĕ ĕçлекен рабочисемпе кахалсем хушшинче пысăк уйрăмлăхсем тумала.

М. Ижейĕв.

Линотипнăй цех инструкторĕ.

Производствăри дезорганизатăрĕсем

Пирĕн хапрăк кăçалхи çулăн производствă планне срукчен тултарчĕ. Иртнĕ çулхипе танаштарсан, вăл чылайах малала кайни курăнать.

Анчах хапрăкра ĕç дисциплини çирĕп пулнă пулсан, тата пысăкрах çитĕнÿсемпе çĕнтерÿсем тума пулĕччĕ. Дисциплинăна прогульщиксемпе кахалсем, дезорганизатăрсем пăсса пынă. Вĕсем ĕçе кайа йулса тухни йе пачах тухманни, ĕç вăхăтĕнче ахаль утса çÿрени—çаксем ĕнтĕ дисциплинăна пăсни пулаççĕ.

1935 çулта пирĕн пата А. Долгорукăвă ĕçе пырса кĕнĕччĕ. Малтанах вăл лайăх ĕçлесе пынă. Кăçалхи çул вăл пĕр сăлтавсăрах прогулсем тума пуçларĕ. Октабĕр уйăхĕнче виçĕ хутчен ĕçе кайа йулса тухнă. Çапла пулин те ăна администраци асăрхаттарнипех иртерсе йанă. Ку çеç мар-ха, тата вăл кайаракпа ытти работницăсене хăй майлă çавăрма пуçларĕ. Епĕр унпа профсойуз йенĕпе те сахал мар калаçнă, анчах вăл йалланах пире: „Сире мĕн ĕç, епĕ кайа йулса тухсан та хăма панă нормăна тултаратăп", — тесе ответлет.

Час-часах тата ÿсĕр пуçпа ĕçе тухнисем йе çав сăлтавпах ĕçрен йулнисем пулаççĕ. Акă, В. Комиссарăв ĕçсе ÿсĕрĕлнĕ хыççăн икĕ кун хушши ĕçе тухмарĕ. Тăтăшах кайа йулса тухать, производствă планне тултараймасть, çитмĕннине вăл туса кăларакан продукци пахалăхĕ начар. Общежитинче те хăйне тытма пĕлмест, час-часах ерех илсе пырать, рабочисемпе вăрçать т. ыт. те.

Анчах дирекци мĕн тунă-ха çавăн пек ирсĕрлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе? Тÿрех каламала, питех те сахал ĕçсем тунă.

„Правда", „Труд" тата ытти хаçатсенче тухса калакансем государствă укçине çаратса пурнакансемпе, прогульщиксемпе, летунсемпе хайаррăн кĕрешсе пырас ыйтăва çивĕччĕн лартаççĕ. Ку ыйту вăхăтлă тата вырăнлă. Прогульщиксемпе лодырсем, дезорганизатăрсем валли совет учрежденийĕсенче, предприйатийĕсенче вырăн пулмала мар.

И. Спирин.

Вырăнть промышлĕннăçăн Шупашкарти хапрăкĕнчи мăçтăр.

Осоавиахим лотерей билечĕ çине

Тутаркас райĕçтăвком çекретарĕ В. Н. Никитин йулташ Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕпе велоçипед выльаса илнĕ. Шупуçĕнчи „Броневик" колхоз счетовочĕ И. Йевушкин йулташ 95 тенкĕ выльаса илнĕ.

П. Й.

Францири реакци ĕççыннисене хирĕç наступлени туни

Мÿнхĕнри каварлашу хыççăн Франци правителстви, шултăра капитал ирĕкне пурнăçа кĕртсе, Чехословакине таткаласа вакламa килĕшнĕ, тĕнчери фашисăма ырă пулас тесе Францин нумай çулсем хушши пулнă сойузникне сутнă. Чехословакине вăра-хурахла çаратма Германи фашисăмĕн аллине парса, Даладйе правителстви капитал магначĕсене пуç тайса, Франци халăхне хирĕç наступлени тăвасси çине куçнă. Ĕççыннисен материальнăй пурнăçĕ çине тапанса пынине реакци „çĕршыв хуçалăхне ура çине тăратас", çавăншăн „кашни французăн нимĕн те шеллемеле мар" текен флагпа туса пырать.

Франци промышлĕннăçĕ пĕр вырăнтан тапранмасăр тăрать. Унăн сăлтавĕ предпринимателсем тăтăшах саботаж туни пулать. Капиталиссем производствăна йуриех чакарса пыраççĕ, заказсем йышăнмаççĕ, предприйатисене хупаççĕ. Çакна вĕсем халăх фрончĕн программине пурнăçа кĕртессине сирсе йарас, социальнăй законодателствăна пăрахаçа кăларас шутпа тăваççĕ, çĕршывра халăх массисем тарахнине вăйлатаççĕ, унпа халăх фронтне дискредитацилес çĕрте уса кураççĕ.

Францин финанс пурнăçĕ калама çук йăвăр. Государствăн 1939 çулти бÿджечĕн расхолла пайĕ 139, 5 миллиард франк пулсан, доходла пайĕ 85 миллиард франк кăна шутланать. Çак бÿджет, расходла пайне доходла пайĕнчен темĕн тери ÿстерсе тунăскер, финанс олигархийĕн Францири „200 çемйе" тесе чĕнекен йатпа паллă пулса тăракан корольсемшĕн ытларах усăллă пулса тăрать. Çакăн пек бÿджет вĕсене сутăнна прессăна çĕршывăн финанс тĕлĕшĕнчи пурнăçĕ йăвăрри çинчен кăшкăрашма тата çавăншăн „кашни французăн нимĕне те шеллемеле мар" тесе ыйтма хавхалантарать. Çав вăхăтрах вăл бÿджет финанс капиталне, панкрута кĕрсе ÿкме патне çитнĕ тата займсен куçĕнчен пăхакан правителствăна чăрмавсăрсемех хăйне кирлĕ пек ĕçлеттерме май парать.

Франци буржуазине характеристикă парса, К. Маркс хăй вăхăтĕнче çапла çырнă: „Государствă дефицичĕ шăпах ĕнтĕ вуринчен ытла унăн спекуляци тăвассин предмечĕ тата хăйне пуйтармали чи кирлĕ сăлкуçĕ пулнă. Кашни çул иртмесренех çĕнĕ дефицит. Кашни тăватă йе пилĕк çул иртмесренех çĕнĕ займ. Кашни çĕнĕ займ финанс аристократине государствă укçи-тенкине çаратма май панă; панкрута кĕрсе ÿкме патне çитнĕ çĕрте искусственнă тытăнса тăрса унăн банкирсемпе вĕсенчен займсем илес тĕлĕшпе пачах усăллă мар условисемпе килĕшÿ тумала пулнă". („Классовая борьба во Франции с 1848 по 1850 г.").

Шултăра буржуази, çĕршывăн економикăлă пурнăçĕнче йăвăрлăхсем кăларса йарса, йулашки çулсенче Франци капиталне йут çĕршывсене 100 миллиард франкалăх турттарса илсе кайнă.

Государствăн 1939 çулти бÿджечĕн доходлă сумминче налогсенчен илмели доходa малтанлăха 47.200 мĕлйун франк шутласа хунă. Дефицит 54 500 мĕлйун франк палăртнă. Правителствă чрезвычайнăй декретсем кăларма йышăннă, çапла майпа дефицита 24 миллиард франк чухлĕ чакарма шутланă.

Çав чрезвычайнăй декретсем,— вĕсене хирĕç Франци халăхĕн мĕлйуншар массисем çĕкленнĕ,— мĕнле декретсем-ха вĕсем?

Финанс министрĕ Поль Рейно туса хатĕрленĕ декретсене Даладйе правителстви нойабĕрĕн 12-мĕшĕнче йышăннă. Вĕсене чрезвычайнăй декретсем тесе акă мĕншĕн калаççĕ: çав декретсене парламентпа килĕшмесĕрех, правителствăн чрезвычайнăй полномочийĕсен ирĕкĕ тăрăх йышăнса çирĕплетнĕ.

Чрезвычайнăй декретсем финанс капиталĕ ĕççынисен пурнăçĕ çине çĕнĕрен наступлени тунине пĕлтерет. Халăх массисем çав декретсене „çуклăхпа йухăнчăкан хура декречĕсем" тесе йат панă.

Францири рабочи клас тата пĕтĕм халăх фрончĕ кĕрешсе илнĕ чи пысăк çитĕнÿсенчен пĕри вăл— 40 сехетлĕ ĕç ерни çинчен калакан саккун пулса тăрать, ăна ĕçсĕр тăрса йулнисене сахаллатас шутпа тунă. Правителствă вăл саккуна пăрахăçа кăларасси çинчен уççăнах пĕлтермеле туман. Формальнă саккун çаплипех йулнă. Анчах ăна пурнăçа кĕртсе пырасси малашнехи виçĕ çул хушшинче йатарласа тунă режимпа пулса пымалла. Ку вăл чăннипе 40 сехетлĕ ĕç ернине пăрахăçа кăларнине, ăна 50 сехет таран йе унтан та ытларах тăсине пĕлтерет. Хĕрĕх сехетрен ытла ĕçлемен рабочисене ĕçрен кăларса йараççĕ тата ĕççĕр тăрса йулнă пирки паракан пособирен хăтараççĕ. Рабочи-делегат йе профсойуз работникĕ рабочисене ĕç вăхăтне вăрăмлатмали çĕнĕ саккуна хирĕç тăма чĕнсен, ăна 3 уйăх таран тĕрмене хупса лартмала; кунсăр пуçне ăна 100 франкран пуçласа 1000 франка çити штраф тÿлеттереççĕ. Предприйати хуçине çав декрета пăснăшăн ун çине 5 франкран пуçласа 100 франка çити штраф хурса „айăплаççĕ".

Чрезвычайнăй декретсем тăрăх, косвеннăй налогсем хытăн ÿсеççĕ, ĕçукçи çине хуракан налог 7,56 процентран пуçласа 8 процента çити ÿсет, ĕçукçинчен икĕ процентлă „чрезвычайнăй отчисленисем" тăваççĕ, почтăпа телеграф тарифĕсем 30 процента çити ÿсеççĕ, çавăн пекех автобуссемпе тата метропа çÿремели хаксем те ÿсеççĕ.

Нойабĕрĕн 12-мĕшĕнче радио тăрăх тухса сăмах каланă чухне, Поль Рейно çапла пĕлтернĕ: чрезвычайнăй декретсем виçĕ çула шутласа хунă мероприйатисен планĕ пулса тăрать, — тенĕ. Çав планра чукунçул çинче ĕçлекен 40 пин рабочине ĕçрен кăларса йама, общĕствăлă ĕçсене укçа-тенкĕ парассине чакарма, колонисен бÿджечĕсене пĕчĕклетме тата ыт. те палăртса хунă.

Çĕнĕрен хуракан налогсенчен пухăнакан укçан пĕтĕм сумми 9 миллиард франк шутланать. Вĕсенчен 4 миллиард та 500 мĕлйунĕ косвеннăй налогсенчен, урăхла каласан, халăхсен сарлака массисен шучĕпе пухăнмала.

„Çакă вăл йăлтах, — тесе çырнă чрезвычайнăй декретсем тĕлĕшпе „Юманите" хаçат, — миллионерсен политики пулса тăрать. Ку вăл — Мÿнхĕнри капитуляцисен политики пулса тăрать, ĕççынни массисене вĕсем хăйсен намăссăр доганăрĕн расхочĕсене тÿлеттерме тăрăшаççĕ. Анчах çук! Халăх хăй сăмахне калĕ. Ĕççыннисем вĕсене пуçмăра кĕртсе ÿкерекен тата Гитлĕр умĕнче капитуляци тăвакан политикăна йышăнмаççĕ. Халăх çапла калать: пуйаннисем тÿлеме тивĕçлĕ! Вĕсем тÿлеччĕр!".

Коммунисла парти — халăх фрончĕн инициатăрĕпе организатăрĕ— капиталисăмлă пысăк компанисен гупăшĕ çине йатарласа тунă налог хумала тума тата вак предпринимателсем çине хуракан налогсене пĕчĕклетме, йут çĕршывсене кăларакан капитал тĕлĕшпе çирĕп контроль тума, ĕççыннисен пурнăçне чылайах йăвăрлатасси патне илсе пыракан косвеннăй налогсене пăрахăçа кăлармала тума, доходсем тĕлĕшпе прогрессивлă налог гума тата ыт. те сĕнет.

Ĕçлевĕн Пĕтĕмĕшлĕ Конфедерацийĕ (Францири профсойузсен пĕрлешĕвĕ) страховăй общĕствăсене национализацилеме сĕнет. Паллă, шултăра страховой компанисем темиçе миллиард франк чухлĕ капитал тытаççĕ. Çав шултăра страховой компанисенчен вуннăшĕ 10 миллиардлăх резервлă капитал тытаççĕ.

Коммунисла парти çапла кăтартса парать: ĕççыннисен материальнăй пурнăçĕ пĕрмайах начарланса пынă хушăрах, капиталиссен усламĕ ĕççыннисен шучĕпе ÿссе пырать. 1936 çулта капиталиссен 198 тĕрлĕрен пĕрлешĕвĕсем пĕр-пĕрин хушшинче 2 миллиард та 539 мĕлйун франк дивиденд валеçнĕ пулсан, 1937 çулта—3 миллиард та 244 мĕлйун франк, урăхла каласан капиталиссен—çав компанисен участникĕсен—усламĕ 27,7 процент чухлĕ ÿснĕ. Даладйен чрезвычайнăй декречĕсем пысăк банксемпе акционерлă компанисем çине тивекен налогсене 48 процентран 32 процента çити чакараççĕ. Капиталисăмлă Францири банкирсемшĕн хĕпĕртесе савăнмали пур!

„Манма йурамасть,—тесе çырать „Юманите".—Брÿнинг правителствин чрезвычайнăй декречĕсем Германире гитлĕрла диктатурă туса хума хатĕрленĕ".

Франци ĕççыннийĕсен усал тăшманĕсем Тардйе, Фланден, Дорио, де ла Рок тата вĕсене витсе тăракан правителствă çывăхĕнчи „çÿлте тăраканнисем" Франци халăхне фашисăм тыткăнне кĕртсе ÿкерме тăрăшаççĕ. Вĕсем парламента салатса йама, „вăйлă влаç" тума, компартипе профсойузсене чарса лартма ыйтаççĕ. Францири шултăра буржуазин фашисланакан елеменчĕсем мĕн тума хăтланнине нойабĕрĕн 16-мĕшĕнче „Виктуар" хаçат лайăх кăтартса панă: „Халь хи вăхăтра, Даладйе—Рейно планĕнчен пурнăç калама çук хакланса кайассине, панкрута тухассине çеç кĕтмели, витĕрех куранса тăнă чухне, маршăл Петена депутатсен палатине салатса йарасси çинчен калакан хатĕр декретпа килме çеç чĕнмеле".

Франци ĕççыннийĕсем çине тата вĕсем йулашки çулсенче кĕрешсе илнисем çине наступлени тăвассине реакци радикалсен партийĕ хутшăннипе туса пырать, вăл парти Францин хальхи вăхăтри правителствинче пуçпулса тăракан вырăн йышăнса тăрать. Премйер-министр Даладйе радикалсен партийĕн представителĕ пулса тăрать.

Трактăрсене тата вĕсенчен кăкарса ĕçлемели машинăсене йусас ĕç мĕнле пыни çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулти декабĕрĕн 12-мĕшĕнче йышăннă постановлени

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла шутлать: Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ тата машинă-трактăрлă станцисен директăрĕсем Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулти çентябĕрĕн 8-мĕшĕнче „МТС-семпе МТМ-сене трактăрсене кĕркунне тата хĕлле йусама хатĕрлесси çинчен" йышăннă постановленине пурнăçа кĕртмен, çавăн пирки те Чăваш республикĕнчи МТС-сенче трактăрсене йусас ĕç, трактăрсене йусамали кампани пуçланнăранпа икĕ уйăх иртнĕ пулсан та, çителĕксĕр пырать. Декабĕрĕн 5-мĕшне трактăрсене 18 процент анчах йусанă. Тутаркас, Шупашкар, Йĕпреç МТСтанцисем ку вăхăтченех трактăрсене йусама тытăнман. МТМ тата МТС ĕçĕнчи халђхи хăвăртлăхсем трактăрсене йусамали квартăл планне тултармала тума пултараймаççĕ, машинă-трактăр паркне çуракине хатĕрлес ĕç пурнăçа кĕмесĕрех йулас хăрушлăх кăларса тăратаççĕ.

Тăваттăмĕш квартăлта трактăрсене йусас ĕç йулса пынин сăлтавĕсем вĕсем — МТС тата МТМ ĕçĕсенче кустаршчинă, йĕркесĕрлĕх, ĕçукçи тӳлес çĕрте хуçасăрлăх тата уравнилăвкă, ĕç дисциплини начарри, маçтерскойсемпе оборудованисене хатĕрлесе çитерменни, МТС тата МТМ директăрĕсем йенчен трактăрсене йусавă çĕрте ĕçлекен рабочисем валђи кулђтурăпа йăла условисем туса парассипе пачах çителĕксĕр ĕçлени пулса тăраççĕ.

Çакăнпа пĕрлех Халăх Комиссарĕсен Совечĕ уйрăм МТС-сем (Вармар т. ыт. те) трактăрсене пахалăхлă йусассишĕн кĕрешессине рабочисем хушшинче тивĕçлĕ вырăна лартман, çавна пула ĕнтĕ йусанă трактăрсен пысăк çитменлĕхсем пулнă тесе палăртать.

Нумай машинă-трактăрлă станцисенче трактăрсене йусакан рабочисем хушшинче политикăлă-массăлă тата воспитани ĕçĕсене пачах çителĕксĕр йĕркеленĕ; социалисăмлă ăмăртăва организацилемен, трактăрсене йусавă çĕрте стахановла йухăма начар сарса пыраççĕ.

„Автотрактородеталь" тата йалхуçалăх снабженин Чăваш республикĕнчи кантурĕсем трактăрсем тата йалхуçалăхĕн ытти машинĕсем валђи пайсене, инструментсене тата йусав ĕçĕнче кирлĕ пулакан материалсене вăхăтра кӳрсе килеймеççĕ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

1. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, МТС тата МТМ директăрĕсене трактăрсене, йалхуçалăхĕн ытти машинĕсене йусамали тăваттăмĕш квартăлти плана йанварĕн 1-мĕш тĕлне, пĕтĕм трактăр паркне — 1939 çулти мартăн 1-мĕшне тултармала тума хушас.

Çĕрĕç Халăх Комиссариатне кашни МТС тата МТМ валђи 1939 çулти пĕрремĕш квартăлта трактăрсене йусамали тĕплĕн хатĕрленĕ вунă кунлăх графиксем пама хушас, ăна мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине йаланах çирĕп контрођ туса тăмала.

МТС тата МТМ директăрĕсен кашни бригадă валђи çирĕп план-график туса памала, вĕсене кирлĕ инструментсем, запаслă пайсем тата материалсем вăхăтра памала, кивĕ запаслă пайсемпе усă курмала, хăшпĕр пайсемпе инструментсене çĕнĕрен тумала.

2. МТС тата МТМ директăрĕсене организаци, нормировани тата ĕçе учота илес, ĕçшĕн тӳлес ыйтусем çине уйрăмăнах çаврăнса пăхма хушас.

Учот тата ĕçсене нормировани тăвас ĕçсене çăмăллатса йĕркелес шутпа МТС-сенчи кашни маçтерской çумĕнче нормировани ĕçĕпе ĕçлеме пур ĕçсенчен те хăтарнă çынсем пулмала.

3. МТС тата МТМ директăрĕсене трактăр паркне йусанă пахалăхшăн хăйсем ответлă пулса тăнин çинчен асăрхаттарас.

Çĕрĕç Халăх Комиссариатне тата МТС директăрĕсене пахалăх мĕнле пулнине кашни кун тĕрĕслеме, дефектлă тата комплектсăр машинăсене йусавран кăлармала мар тума хушас.

Ремонт ĕçне пысăк пахалăхлă тăвассишĕн кĕрешес, уйрăм пайсене тĕрĕс браклас тата запаслă пайсемпе перекетлĕн усă курас майпа, Çĕрĕç Халăх Комиссариатне пур машинă-трактăрлă станцисенче те механиксенчен, чи лайăх бригадирсенчен тӳррĕмĕнех МТС директăрне пăхăнса тăракан контрођор-браковщиксем уйăрса пама хушас. Пур деталђсемпе узелсене те йусавран тухнă хыççăн, чи малтан контрођор-браковщик тĕрĕслесе йышăнмала тăвас.

4. „Автотрактородеталь" Чăваш республикĕнчи кантурĕн управђайушчине Клокăв йулташа тата йалхуçалăх снабженин кантурĕн управђайушчине Алексейĕв йулташа татăклă мерăсем йышăнса, МТС тата МТМ валђи трактăрсене тата ытти машинăсене йусанă çĕрте кирлĕ пулакан запаслă пайсене, инструментсене тата ремонт материалĕсене вăхăтра, çителĕклĕ таран кӳрсе килме хушас. Запаслă пайсем тата ремонт материалĕсен уйăрнă фончĕсене пурне те вăхăтра илсе тăмала тăвас пулать.

5. Райĕçтăвком председателĕсене МТС-семпе МТМ-сенче трактăрсене йусас ĕç мĕнле пыни çинчен контрођ тума, ремонт ĕçне сарса пырас çĕрте, трактăрсене йусакан рабочисен кулђтурăпа йăла условисене лайăхлатас тата пурăнмали çуртăсем тупса парас çĕрте йаланах пулăшса пыма хушас. Райĕçтăвкомăн президиум ларăвĕсенче трактăрсене йусас ĕç мĕнле пыни çинчен МТС тата МТМ директăрĕсен доклачĕсене итлемеле.

6. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, МТС тата МТМ директăрĕсене, директăрăн политпай йенĕпе ĕçлекен заместителĕсене маçтерскойсем, цехсем, бригадăсем, трактăрсене йусакан рабочисем хушшинче массăлă-политикăлă ĕçе, социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса пыма, стахановла йухăма пуçарса ăна сарса пыма, рационализатăрла сĕнӳсене пухма, чи лайăх стахановецсен паха опычĕсене республикăри тата районри хаçатсем урлă анлăн çутатса тăма хушас.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ А. СОМĂВ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхаканĕшĕн М. АЛЕКÇЕЙĔВ.

Выђăх-чĕрлĕх йышне ӳстерессишĕн

Халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ „Выђăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе пирĕн пĕтĕм партин, пĕтĕм работниксен, партире тăраканнисен те, партире тăманнисен те хăйсен аллине илмеле, выђăх-чĕрлĕх ĕрчетес задачă халђхи вăхăтра — пайан ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе çитернĕ тĕш тырпул ыйтăвĕ ĕнер мĕнле малта тăнă пекех — чи малти вырăнта тăрать", тесе питĕ çирĕппĕн кăтартса пачĕ.

Партипе правителĕствă пирĕн колхозсене выђăх-чĕрлĕх ĕрчетме тата кашни колхозник килĕнче усракан тума пысăк пулăшу параççĕ. Апла пулсан та Йелчĕк районĕнчи колхозсенче ĕнесĕр хуçалăхсем çаплах чылай-ха, вĕсене ĕне туйантарас тĕлĕшпе районти работниксем çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Государствă паракан укçа-тенкĕпе питĕ сахал усă кураççĕ.

Выђăх-чĕрлĕхсене лайăх хĕл каçарма чи кирли вăл — ăшă витесемпе апат çителĕклĕ хатĕрлени пулать. Çапла пулин те Йелчĕк районĕнчи хăшпĕр колхозсем выђăхсене хĕл каçарма лайăх хатĕрленмерĕç. Сăмахран, „Коминтерн" колхозра 20 лаша валђи вите çитмест.

Чылай колхозсенче пĕтĕ кĕсресене зоотехникă вĕрентнĕ пек пăхса, вĕсемпе пĕлсе усă курмаççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ кăçалхи çул „Коминтерн", „Красное знамя", „Ново-Ишдеряков" тата Кирăв йачĕпе тăракан колхозра кĕсресем хăм пăрахнă.

Районта зоотехниксем çитмеççĕ. Çавăнпа та зоотехниксем колхозсене сайра-хутра кăна йе пачах килсе курмаççĕ. Çакна пула, колхозсенче выђăхсене рацион тăрăх çитересси пурнăçа кĕрсе пымасть.

Çак çитменлĕхсене Йелчĕк районĕнчи çĕрĕç пайĕнче пĕлеççĕ пулин те, нимĕнле мерă та йышăнмаççĕ.

Ветеринари техникĕ — Йегорăв.

Массăсем хĕснипе радикалсем, хуларипе йалти вакă тата вăтам буржуази интересĕсене палăртса тăраканскерсем, халăх фрончĕ çумне çыпçăннă. Реакцилĕ шултăра буржуази, Франци ĕççыннийĕсен фашисăмла хирĕçле пĕрлĕхне салатса йама тăрăшса, радикалсене халăх фронтĕнчен уйăрса илес тĕллев лартнă. Радикалсен партийĕн нумайах пулмасть Марселре пулса иртнĕ сйесĕн решенийĕсем радикалсем халăх фрончĕпе уйăрăлас çул çине тăнине кăтартса параççĕ. Радикалсенчен чылайĕшĕ хăйсен партийĕн руководствине хирĕç, халăх фронтне сыхласа усрассипе ăна çирĕплетесси çинчен тухса калаççĕ.

Даладйе правителĕствин чрезвычайнăй декречĕсене хирĕç Францири пролетариат нойабĕрĕн 30-мĕшĕнче пĕтĕм çĕршывĕпе забастовкă туса ответлерĕ, забастовкăна Ĕçлевĕн Пĕтĕмĕшлĕ Конфедерацийĕ чĕннипе туса иртернĕ.

Пĕтĕмĕшлĕ забастовкă пулаччĕнех пĕтĕм Франци çĕршывĕ тăрăх çав декретсене хирĕç забастовкăсен хумĕ сарăлса кайнă. Ĕçлевĕн Пĕтĕмĕшлĕ Конфедерацийĕ нойабĕрĕн 26-мĕшĕнче чрезвычайнăй декретсене хирĕç протест организациленĕ, вăл ăнăçлăн иртнĕ. Çав кун Францири пур хуласенче те ĕççыннисен нумай çынлă демонстрацийĕсем пулса иртнĕ.

Правителĕствă, пĕтĕмĕшлĕ забастовкăна чарас тесе, мĕн тумалине пурне те тунă. Чылай предприйатисене реквизици тунă (урăхла каласан, вăрçă чухнехи пек положенине куçарнă), государствăн пур учрежденийĕсем те забастовкăра хутшăнакан служăщчисене ĕçрен кăларса йамали çинчен циркуђарсем илнĕ. Пролетариата хăратса ӳкерес шутпа, Рено автомобил савăчĕсен хуçисем (Париж) бастовкă тунă 28 пин рабочине ĕçрен кăларнă. Ытти нумай предприйатисенче те рабочисене массăлăн ĕçрен кăларса йанă. Хапрăксемпе савăтсене йышăнса илнĕ забастовщиксене хирĕç полиципе çарсем куççуђ йухтаракан газсемпе тултарнă бомбăсем хута йанă.

Анчах, Франци рабочисене нимĕн те хăратайман.

Ĕçлевĕн Пĕтĕмĕшлĕ Конфедерацийĕ пĕлтернĕ сведĕнисем тăрăх, забастовкăна Франци промышленнăçĕн пур отрăçлисенчи рабочисем те хутшăннă. Металлиссем 80 процентран пуçласа 100 процент таран, горнорабочисем 80 процент, текстиђщиксем 70 процентран пуçласа 100 процент таран забастовкă тунă çĕре хутшăннă. Портсенче ĕçлекен рабочисем, морйаксемпе докерсем хушшинче те забастовкă туллийĕн пулса иртнĕ.

„Ĕçлевĕн Пĕтĕмĕшлĕ Конфедерацийĕ чĕннипе Франци ĕççыннийĕсем, — тесе çырать „Юманите", — протест тума çĕкленчĕç. Промышленнăçăн шултăра отрăçлисем пурте ĕçлеме чарĕнчĕç. Портсем ĕçлеме пăрахнă. Провинцире халăх хусканăвĕ столицăри пекех хăватлă пулчĕ. Париж урăх ĕнтĕ пĕччене тăратса хăварнă хула мар. Сутĕçсенчен нумайĕшĕсем чи пирвайхи хут хăйсен лавкисене хупса хучĕç, вĕсем правителĕствă политикине сивлесе рабочи клас çумне пĕрлешрĕç. Çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн çакнашкал пĕрле çапăçнă хыççăн пролетариат тата вăтам классем халĕ таччăн çыхăннă".

Даладйе правителĕстви тата предпринимателсем пĕтĕмĕшлĕ забастовкăра пулнисем тĕлĕшпе хăйар репреççисем тăваççĕ. Реакцилĕ буржуази компартине хирĕç, Франци пролетариачĕн профсойузсен организацийĕсене хирĕç поход сарса пырать.

Çĕркăмрăк, хими тата металлурги промышленнăçĕн пысăк центрĕсенче пуринче те предпринимателсем локаутсем тăваççĕ. Пĕр Париж районĕнче кăна 100.000 рабочине ĕçрен кăларса йанă. Пиншер предприйатисене хупса лартнă. Локаутсемпе ĕçрен кăларассине пуринчен малтан рабочи-коммунисссене хирĕç туса пыраççĕ. Нумай рабочисене арĕслесе суда панă.

Реакцилĕ шултăра буржуази Даладйене вăл тума палăртнă суйлав системин реформине пурнăçа кĕртме пур майсемпе те васкатать, вăл реформă Франци парламентĕнче халăх фрончĕн позицийĕсене хыттăн чакарас тĕллев лартать.

Реакци наступлени тунине хирĕç, рабочи клас отпор парать. Реакци наступлени тунине хирĕç протестлесе чылай çĕрте забастовкăсем тухса кайнă. Репреççисене хирĕç протестлесе рабочисем пĕтĕм çĕршывĕпех митингсем туса ирттереççĕ. Даладйе правителĕствине отставка кăларассишĕн тата унăн вырăнне халăх фрончĕн ирĕкне пурнăçа кĕртсе пыракан правителĕствă тăвассишĕн вăйла йухăм пырать.

Халăх фрончĕ — Франци ĕççыннийĕсен нумай мĕлйунлă союзĕ — фашисăмпа вăрçă вăйĕсене демократипе мирĕн вăйĕсем çĕнтермеле тăвассишĕн кĕрешет. Нойабĕрĕн 30-мĕшĕнчи пĕтĕмĕшлĕ забастовкă Францири организациленнĕ рабочи класăн хăватне, унăн реакцине хирĕç, халăх фронтне пĕтерсе хума тата Францири фашисла диктатурă режимне тума тăрăшакан реакцине хирĕç пыракан кĕрешӳре унăн ирĕк-кăмăлне татах тепĕр хут кăтартса пачĕ.

Б. Алексейĕв.

А. СОМĂВ.

Трактăрсене йусассине болђшевикла организацилемеле*)

Кăçалхи çул пирĕн республикăра трактăрсемпе ĕçлемели плана декабĕрĕн 1-мĕшне мĕнпурĕ те 77,6 процент анчах тултарнă. Республикăра пĕр машинă-трактăрлă станци те плана тултарайман.

Начар ĕçленин сăлтавĕ мĕнре-ха? МТСтанцисем начар ĕçленин тĕп сăлтавĕсенчен пĕри вăл — 1937 — 1938 çулта трактăрсене тата вĕсенчен кăкарса ĕçлемели машинăсене пачах начар пахалăхпа йусани, уйрăм машинă-трактăрлă станцисенче сăтăрла ĕç пекех преступлени туни пулса тăрать.

Чăваш республикĕн правителĕстви çавна шута илсе, çентабĕрĕн 8-мĕшĕнчех „МТС-семпе МТМ-сен трактăрсене кĕркунне тата хĕлле йусама хатĕрленесси çинчен" решени йышăнчĕ, унта иртнĕ çулта трактăрсене йусас çĕрте пулнă пур йăнăшсемпе çитменлĕхсене те кăтартса панă тата кăçал трактăрсене йусанă çĕрте иртнĕ çулти çитменлĕхсене тепĕр хут тумала марри çинчен тĕрĕс кăтартусем панă. Анчах, чылай МТС директăрĕсем кăçалхи çул трактăрсен паркне начар ĕçленинчен урок тумарĕç, трактăрсене тата вĕсенчен кăкарса ĕçлемели машинăсене йусас çĕрте каллех çав йăнăшсенех тăваççĕ. Чăннипех те, чылай МТС-сем, сăмахран, Тутаркас, Шупашкар, Йĕпреç МТС-сем ку вăхăтченех трактăрсене йусама пуçăнман, республикăра трактăрсене йусамали плана декабĕрĕн 5-мĕшне 18 процент анчах тултарнă. Çакă вăл — шиклентерекен цифр пулса тăрать. МТС директăрĕсем, директăрсен политпай йенĕпе ĕçлекен заместителĕсем, механиксем ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б) 1 Тĕпкомĕ „ССРС кăнтăрпа хĕвелтухăçри çанталăк уйăр тăракан районсенче çирĕп тухăçлă тырпул туса илмели майсем çинчен" йышăннă решенирен МТС-сем умне тухса тăракан çĕнĕ требованисене — пĕтĕм трактăр паркĕпе ĕçлессин пахалăхне ӳстерессине шута илмеççĕ.

Çирĕп асра тытмала, 1939 çулти сталинла вăйлă тырпулшăн кĕрешӳн ăнăçлăхне, хађ трактăрсене тата вĕсенчен кăкарса ĕçлемели машинăсене лайăх йусани татса парать.

Чи малтанах, производствă процесне мĕнле организацилесси çинчен шухăшласа пăхмала. Трактăрсене йусанă тата йусанă трактăрсене йышăннă çĕрте çав трактăрпа ĕçлекен трактăриста обйазательнă пулмала.

Правителĕствăн решенийĕнче директăрсемпе аслă механиксем ремонт ĕçĕн пахалăхĕшĕн ответлă пулса тăнине кăтартса панă. Директăрсен трактăрсен кашни уйрăм пайне мĕнле йусанине тăтăшах тĕрĕслесе тăмала. Çавна май ĕнтĕ машинă-трактăрлă маçтерскойсенче тата МТС-сенче механиксенчен тата чи лайăх бригадирсенчен уйăрнă, тӳррĕменех МТС директăрне пăхăнса тăракан специађнăй контрођор-браковщиксем пулсан, начарах пулмĕ.

Чылай МТС директăрĕсем тата аслă механиксем обйективлă сăлтавсем çинче чарăнса тăчĕç. Анчах вĕсем шалти ресурссемпе мĕнле усă курни çинчен сахал калаççĕ. Питĕ кирлĕ материалпа, сăмахран, баббитпа мĕнле усă курни — пысăк ыйту пулса тăрать. Чылай МТС-сем кăтартса панă нормă тăрăх ĕçлеймеççĕ, çав вăхăтрах пирĕн баббита ытлашши расхутламан МТМ-сем те пур. Мĕншĕн-ха ĕнтĕ çав МТМ-сен опычĕсене ытти МТС-сене куçармаççĕ тата усă курмаççĕ? Пирĕн çакăн пек кирлĕ ыйтусенче, сăмахран кивĕ пайсене кăшт йусаса усă курасси тата уйрăм запаслă пайсемпе инструментсене тăвасси пирки начар пуçарса пыраççĕ. МТС-семпе МТМ-сенче запаслă пайсене браклас çĕрте хăйне тĕллĕн ĕçлеççĕ. Браклас ĕçе кашни МТС-че тата МТМ-че тĕрлĕрен, мĕнле килчĕ çавăн пек, куç висипе ирттереççĕ, час-часах пайсемпе тĕрĕслесе висе пыракан приборсене усă курмали аслăлăхпа-техникăлла нормăсене пăсаççĕ. Çакна малашне пĕтерес пулать. Çак фактсем ĕнтĕ уйрăм МТС директăрĕсем тата механиксем уйрăм пайсене браклас ĕç çине çиелтен пăхни çине кăтартса параççĕ.

Хăшпĕр МТС директăрĕсем, механиксем тата трактăриссем хăйсен техникăлла пĕлӳне хăпартас ĕç çине тӳнтерле пăхни çинчен пирĕн тĕплĕн сӳтсе-йавмала.

Пирĕн техникăла вĕренĕве болђшевикла организацилемеле, аслăлăхпа техникăла шухăшсене малалла аталантарса пыракан çынсен опычĕсене анлăн çутатса пымала. Малта пыракан МТС опычĕсемпе усă курса, кивĕ запаслă пайсене кăшт йусаса усă курассине, уйрăм пайсемпе инструментсене çĕнĕрен тăвассине аслăлăх кăтарнă пек организацилемеле. Кивĕ пайсене браклассине тĕрĕс организацилемеле, ку ĕç çине тимсĕр, кустарла пăхнине сивлемеле, аслăлăхпа техникăла нормăсене тата тĕрĕслесе висекен приборсене çирĕп пăхăнса ĕçлемеле.

Кунта „Автотрактородеталь" агентстви (управђайушчийĕ Клокăв йулташ) тата йалхуçалăх снабженин кантурĕн (управђайушчийĕ Алексейĕв йулташ) ĕçĕсене тĕрĕс критиклерĕç. Чăнах та пирĕн республикăра запаслă пайсем çитмесçĕ. Кăçал пирĕн республикă 25 пин поршневой палецсем тата 800 прокладкă илсе çитереймен факт „Автотрактородеталь" руководствин пуçарулăх çукки, центрти организацисенче ыйтăва тĕрĕс лартма пĕлменни çинчен каласа парать. Клокăв йулташăн пирĕн хамăрăн чылай савăтсенче запаслă пайсем тата инструментсем тăвасси çинчен çирĕппĕн шухăшласа пăхмала, ку ĕçе хавхалантарса пымала. МТС семпе МТМ-сене материалсем парса тăрассине тĕрĕслесе тăмала. Вĕсен айакран пăхса, сăнаса тăракансем пулмала мар.

Малала çынсем çинчен. Тӳрех каламала, чылай МТС директăрĕсем трактăриссен, стахановецсен йăла условисене лайăхлатас тĕлĕшпе тивĕçлипе ĕçлемеççĕ. Уйрăмах ку вăл Тутаркас МТС-не тивет. Кунта трактăриссем ĕçрен пăрахса кайаççĕ, дирекци вĕсене трактăрсене йусанă çĕрте хăварасшăн. Приказсемпе ĕçе тӳрлетме çук. Кулђтурăпа йăла условисене лайăхлатас йенĕпе тăрăшса ĕçлемеле, вара тинех трактăриссем ĕçрен тухса кайма чарăнĕç. Вăрмар МТС-че те трактăрсене пахалăхлăн йусасси çинчен калаçмали çук. Рабочисем ĕç хыççăн 7 километр таран килĕсене кайаççĕ.

МТС работникĕсем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе начар туса пынине палăртмала. Сăмахран, Вăрмар МТС-не илер, кунта Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе парти Обкомĕ çентабĕрĕн 8-мĕшĕнче йышăннă постановлени çинчен пĕлмеççĕ. Вăрмарта „Парти историне" вĕренессине организацилес тĕлĕшпе те нимĕн те туман. МТС руководителĕсем ку тĕлĕшпе рабочисене парти Тĕпкомĕн решенийĕ çинчен те ăнлантарса паман. Çаксем ĕнтĕ директăрсен политикă йенĕпе ĕçлекен заместителĕсем партилĕ-политикăлă ыйтусемпе çителĕксĕр ĕçленине кăтартса параççĕ. Хăшпĕр уйрăм йулташсем облаçри парторганизацин XIX-мĕш конференцин тата парти Обкомĕн II-мĕш пленумĕн решенисене ăнланса илмен пулас.

Трактăриссемпе расчот тăвассине хакламаççĕ. Партипе Совет организацисен ку ĕçре МТСтанцисене пулăшмала. Трактăриссемпе хăвăртрах расчот туса çитермеле, колхозсене МТС умĕнчи парăмсене тӳлесе татарас йенĕпе мерăсем йышăнмала.

Тепĕр ыйту вăл — трактăрсем валђи çунтармали йапаласем кӳрсе килесси. Иртнĕ çулта Главнефтесбытăн кантурĕсем МТС-сем хăйсем турттармаççĕ тесе çунтармали йапаласене кӳрсе килмен. Çакă ĕнтĕ чăннипех тăшманла ĕç пулнă. Пирĕн çунтармали йапаласене халех çителĕклĕ таран кӳрсе килмеле. Çураки вăхăтĕнче çунтармали йапаласем çук тенипе чăрмав ан пултăр. МТС-сенчи пур цистернсене çунтармали йапаласемпе туллийĕх тултарас пулать.

Кадрсем хатĕрлесси çинчен. Епĕр ку тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлетпĕр. Канашри механизаци шкулне кăçал вĕренме 60 механик илмеле пулнă пулсан, 46 çын кăна илнĕ, вĕсем хушшинче хĕрарăмсем 3 çын çеç; шоферсем 100 çын илес вырăнне 33 çын кăна илнĕ, — вĕсем хушшинче пĕр хĕрарăм та çук.

Йанкăлчри шкула вĕренме 180 çын илес вырăнне 77 çын анчах илнĕ, вĕсем хушшинче те 4 хĕрарăм çеç. Çакă ĕнтĕ Сталин йулташ „кадрсем пурне те татса параççĕ" тенĕ кăтартува хăшпĕр йулташсем маннине кăтартса парать.

МТС-сенче хĕрарăмсем сахал, мĕншĕн тесен епĕр трактăристкăсен ĕçĕсем çине кирлĕ пек çаврăнса пăхман-ха. Пирĕн хĕрарăм кадрсем пулмала. МТС-сенче хĕрарăмсен ĕçĕсене хакламаннине малашне пĕтермеле. Малта пыракан трактăристкăсен, комбайнеркăсен паха ĕçĕсене сарлакан çутатса пымала.

ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ те çĕнĕрен организациленĕ МТС-сене тата йулса пыракан МТС-сене начар пулăшать. Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче дисциплинă чаплах мар. Ĕçĕн пĕр участкине — пусуçаврăнăш ыйтуне илер. Кирлĕ ĕç. Халăх тăшманĕсем ку ĕçре нумай сийенленĕ. Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе парти Обкомĕ ку ĕçе — пусуçаврăнăш ĕçне тӳрлетме тытăнсан вырăнти организацисем ку ĕçре çаврăнăçусăр ĕçленине куртăмăр. Çаксем ĕнтĕ Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче государствă дисциплини кирлĕ вырăнта тăманнине кăтартса параççĕ.

Вырăнти организацисем МТС-не кирлĕ пулăшу пани çук: районти руководителĕсен МТС ĕçĕсемпе, трактăрсене йусас ĕçсемпе интересленмеле. Вĕсен маçтерскойсенче пулса, трактăриссем мĕнле ĕçленине, вĕсене мĕн çитменнине пĕлмеле.

Иртнĕ çулти йăнăшсене шута илсе, трактăрсене йусакан рабочисемпе трактăриссем хушшинче социалисăмлă ăмăртăва, стахановла йухăма сарса пынипе трактăрсене партипе правителĕствă кăтартса панă срукра йусаса çитермеле.

Епĕр партире тăракан тата партире тăман пур болђшевиксене те, пур МТС руководителĕсене те вăйлă тырпулшăн кĕрешес çĕрте ĕçе татса паракан участкăсенче малта пыма, коммуниссен парти йертсе пынипе 1939 çулта йалхуçалăхĕнче халиччен курман çитĕнӳсем тума чĕнетпĕр.

Сталин йулташ çулсеренех 7—8 мĕлйард пăт тĕштырă туса илмеле тесе панă лозунга пирĕн пурнăçа кĕртмеле.

*) ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ А. Сомăв йулташ МТС директăрĕсен канашлăвĕнче, 1938 çулти декабĕрĕн 10-мĕшĕнче каланă сăмахран.

Амăртăва пуçарса, йертсе пыни кирлĕ

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ „Чăваш республикĕнчи колхозсене çирĕп тухăçлă тырпул туса илмеле тăвасси çинчен" йышăннă постановленине Çĕрпӳ районĕнчи колхозсенче анлăн сӳтсе-йавнă хыççăн, районра çитес çулхи çуракине хатĕрленес ĕç вăйланчĕ.

„Пионер", „Йелаш", „Оборонă", „Çĕнĕ вăй", „Боевик" колхозсенчи бригадăсем тата колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче çитес çулхи вăйлă тырпулшăн социалисăмлă ăмăртăва, стахановла йухăма тивĕçлипе сарса пыраççĕ.

Чăрăш колхозĕ вăрлăхсене трийĕр витĕр кăларса çитерет. Çавнашкалах вăрлăхсем мĕнле шăтнине те тĕрĕслесе пăхма ĕлкĕрнĕ.


Нумай колхозсенче агрокружоксем организациленĕ. Вăл кружоксене агрономсем, йалти учителсем йертсе пыраççĕ. Çав кружоксенче колхозниксемпе колхозницăсем агротехникă ĕçĕсене вĕренеççĕ. Вĕреннисене ĕçре пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. „Луч", „Пионер", „Боевик" тата ытти колхозсенче те уйра йур тытса купалантарма çапсем, улăм кĕлтисем хатĕрленĕ. Çак асăннă колхозсенче çĕре çемçетмели вырăнти йапаласене хатĕрлеççĕ, минераллă удобренисем кӳрсе килнĕ.

Районри колхозсенче „Љӳтесценс" текен суртлă тулă вăрлăхĕ 800 центнĕр, „Диппе" сĕлĕ — 100 центнĕр, „Московский" сĕлĕ — 140 центнĕр çитмест. Çак суртлă тырă вăрлăхĕсене районти колхозсенчех тупма палăртнă. Чылай колхозсенче пăрçа, йасмăк тата кантăр вăрри вăрлăхĕсем çитмеççĕ. Çак вăрлăхсене ăçтан тупассине райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем хăйсем те пĕлмеççĕ, мĕншĕн тесен вĕсене районта тупма çук. Çĕрулми вăрлăхĕ пирки те ĕç çавнашкалах.

Пур колхозсенче те вăрлăхсене тасатма машинăсем çителĕклĕ. Районĕпе триейрсем — 24, ВИМ — 2 машинăсем — 2, сортировкăсемпе клейтонсем — 106 шутланаççĕ. Анчах çав машинăсемпе колхозсенче туллин усă курмаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ хăшпĕр колхозсенче вăрлăхсене суртласа тасатас ĕç пуçланман темеле.

Райçĕрĕç пайĕ пирки пĕр-ик сăмах каламала. Райçĕрĕç пайĕ çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешĕве тивĕçлипе йертсе пыни çук. Малта пыракан колхозсен чаплă пуçарăвĕсене ытти колхозсене куçармала, вăл пуçарăва райçĕрĕç пайĕ йенчен йертсе пыни кирлĕ.

Й. Никифăрăв.



Тӗраспӑлӗ хулинчи (Молдаван АССР) ковровщицӑсем „Папанинӗҫсем" ӳкерчӗклӗ кавир тӗрлеҫҫӗ.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: „Папанинӗҫсем" ӳкерчӗклӗ кавир.

(Бюро клише ТАСС).

Йалпо ӗҫне йӗркелемен

Шӗнерти йалпо (Ҫӗрпӳ р.) кашни кварталрах хӑйӗн ӗҫӗсем ҫинчен пайщиксем умӗнче отчот туса парать. Пайщиксем кашни отчот хыҫҫӑнах йалпо ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене пӗтерме хытӑнах хушса хӑвараҫҫӗ. Анчах йалпо правленийӗ (председателӗ П. Федарӑв йулташ) ҫитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе начар ӗҫлет.

Йалпо ӗҫҫыннисене куллен кирлӗ таварсене ҫителӗклӗ тата вӑхӑтра кӳрсе килмест. Ҫавӑн пирки йалпо иртнӗ виҫӗ квартал хушшинче те таварҫаврӑнӑш планне 72 процент ҫеҫ тултарнӑ.

Хальхи вӑхӑтра та Шӗнерти йалпо лавкисенче: сахӑр, тапак, супӑнь, вермишел т. ыт. таварсем те ҫук. Колхозниксем тавар илме йалта лавка пур ҫинченех Вӑрмар районӗнчи Туҫари йалпо лавкисене каяҫҫӗ. Туҫари йалпо лавкисенче: сахӑр, спичка, махоркӑ т. ыт. куллен кирлӗ таварсем йаланах пур.

Ҫав вӑхӑтрах Шӗнерти йалпо лавкисенче кайман таварсем 3 пин тенкӗлӗх ытла выртаҫҫӗ.

Йалпо таварҫаврӑнӑш планне тултарманни йалпо уйрӑмӗсенче продавецсене йалавах улӑштарнинчен килет. Йалпора 3 квартал хушшинче 14 продавец улшӑннӑ. Йалпо председателӗ те 3 ҫынна ҫитнӗ.

Кунта растратчиксемпе ҫителӗксӗр кӗрешеҫҫӗ. 1938 ҫулхи йанварӗн 1-мӗшне шыраса илмели растратӑ укҫи 4084 тенкӗ пулнӑ, виҫӗ квартал хушшинче татах та 5177 тенкӗ растратӑ тунӑ. Ҫак шутран иртнӗ виҫӗ кварталра растратӑ укҫине пурӗ те 6504 тенкӗ ҫеҫ шыраса илнӗ.

Иулашки вӑхӑтра йалпо массӑпа ӗҫлессине начарлатрӗ. Виҫҫӗмӗш квартал итогӗсем ҫинчен 18 йалта отчотсем туса памалла пулнӑ пулсан пурӗ те 11 йалта ҫеҫ отчотсем иртернӗ. Ревизи комиҫҫийӗ (председателӗ Й. Константинӑв йулташ) пӗр йалта та отчот туман.

Йалпори ҫакӑн пек ҫитменлӗхсем ҫинчен колхозниксем темиҫе хут та райсойуза тата Чӑвашсойуза та пӗлтернӗ.

И. Михайлӑв.

Халӑх перепиҫӗ умӗн

ИШЛЕЙ. Шурча йалсоветӗнчи Шуркасси йалӗнче массӑлла-ӑнлантару ӗҫӗ лайӑх пырать. Кунта уйрӑмӑн илсен колхозницӑсемпе, колхозниксемпе, комсомолӗҫсемпе пухусем туса иртернӗ. Пухусенче пулас перепиҫ ҫинчен докладсем итленӗ. Агитаторсем тӗнчери лару-тӑру ҫинчен те ӑнлантарса параҫҫӗ.

Халӗ комсомолӗҫсем перепиҫе кӗтсе илнӗ май йатарласа вечӗр иртерме хатӗрленеҫҫӗ. Вечӗрта перепиҫ ыйтӑвӗпе калаҫу пулать тата драмкружок членӗсем „Тӑван ҫӗршывшӑн" пйесӑна лартса параҫҫӗ.

Счетчик М. П. Прокопйӗв.

Счетчиксен курсӗ

КУСЛАВККА. Районри халӑх хуҫалӑх учочӗн пайӗ 1939 ҫулхи халӑх перепиҫӗнче ӗҫлеме уйарса хунӑ счетчиксен курсне туса иртерчӗ. Вӑл курсра 25 ҫын пулчӗ. Вӗсем пурте лайӑх вӗренсе ӗҫкӗрӗҫ.

Декабӗрӗн 12-мӗшӗнче ҫӗнӗрен 25 счетчик вӗренме тытӑнчӗҫ. Кун пек курссем урлӑ районри пурӗ 75 счетчике вӗрентсе кӑларма палӑртса хунӑ.

А. Зайцӗв.

Вылӑхсене ирӗклӗн страхлаҫҫӗ

ТУТАРКАС. Кӑпас йалсоветӗнчи «КИМ» колхоз членӗсем килҫуртсемпе вылӑх-чӗрлӗхсене ирӗклӗн страхлании уссине ӑнланса илчӗҫ.

Иртнӗ ҫулта йалсовечӗпе 6 хуҫалӑх кӑна вылӑхсене ирӗклӗн страхланӑ пулсан, кӑҫал 39 хуҫалӑх майракалӑ шутра вылӑхсене 42 пуҫ, сыснасене 16 пуҫ ирӗклӗн страхларӗҫ.

С. Савелйӗв.

Государствӑна тырӑ сутаҫҫӗ

ТРАК. Вутланти „Комбайн" колхоз членӗсем хӑйсенчи ытлашши тырра государствӑна 52 центнӗр сутрӗҫ.

Г. Степанӑв.

Врач канашӗсем

Простудӑ ҫинчен

Шӑнса чирленисене халӑх хушшинче простудӑ теҫҫӗ. Вӑра ун пек чух килтех тӗрлӗ майсемпе тарлаттарса сывалма тӑрӑшаҫҫӗ. Чӑн, нумай чухне шӑннипе пуҫ ыратни тарланӑ хыҫҫӑн иртсе кайать. Анчах мӗнле чир вӑл простудӑ?

Наукӑра простудӑ йатлӑ чир ҫук. Простудӑ хыҫӗнче тӗрлӗ чирсем пытанса тӑраҫҫӗ. Нумайӗшӗ вӗсенчен шӑннӑ хыҫҫӑн пуҫланса кайаҫҫӗ. Мӗншӗн вӑл апла? Шартлама сивӗри ҫанталӑкра микробсем тытӑнса тӑраймаҫҫӗ вӗт! Астӑвас пулать, ҫын ҫумӗнче микробсем йаланах пур. Ҫаварта, хӑлха шӑтӑкӗсенче, ӳт ҫумӗнче, пыршӑра тата ыт. ҫӗрте микробсем пытанса пурӑнаҫҫӗ. Пуринчен ытла вӗсем таса мар пурӑнакан килйышсенче, мунча кӗмесӗр пурӑнакан ҫынсем ҫумӗнче хунама йураҫҫӗ. Ҫапах та вӑл микробсем пур чух та ҫынна чирлеттереймеҫҫӗ, мӗншӗн тесен организм вӑйӗ вӗсене ӗрчесе кайма чарса тӑрать. Сӑмахран илер пуринчен те хӑрушӑ туберкулёз чирне. Кох палӑчкисене ҫӑтса курман ҫын сахал пулӗ. Тепӗр чух туберкулёзла ҫын ҫемйерех пулать. Ҫапах чирлекенсем пурте мар. Вайлӑ организм ӑшӗнче микробсене ӗрчеме слови ҫук, ҫавӑнпа вӗсем чир йертейм серех пӗтеҫҫӗ. Пурне те палла ӗнтӗ, вӑйсӑр ҫынсем йалавах час чирлеҫҫӗ. Организмӑн уйрӑм органӗсен микробсемпе кӗрешес вӑйне чакарас ӗҫре сивӗ, уйрӑхла каласан, шӑнса пӑсӑлни чылайах пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Ун пек чух вӑра ҫумри микробсем, организм вӑйсӑрланнипе усӑ курса, ӗрчеме тытӑнаҫҫӗ. Кайран ҫын кирек мӗнле чирпе чирлесе ӳкет. Кунта епӗр кӑшт пуҫ ыратни ҫинче чарӑнса тӑмӑпӑр. Пуринчен ытла шӑннӑ (простудӑ) хыҫҫӑн ҫакӑн пек чирсем час-час пулаҫҫӗ: пыр ыратни (ангина), сунас (насмӑрк), грипп, ревматизм (пуринчен ытла нӳрӗ ҫӗрте чылайччен шӑнса пӑсӑлнӑ хыҫҫӑн), ӳпке шыҫни тата ыт. Простудӑ хыҫҫӑн чылай хӑруш чирсем пулма пултараҫҫӗ. Сӑмахран, ӳпке шыҫнипе виленсем те сахал мар. Ҫавнашкалах, ангинӑпа ревматизм чирӗсем чӗре ҫине кусма йуратаҫҫӗ, чӗре порокӗ пулать. Паллӑ, ҫавӑн пек чирсем вӗсем килте тарласа выртнипех иртмеҫҫӗ, вӑрӑма тӑсӑлма, тарӑнланма кӑна пултараҫҫӗ. Кунта вӗсенчен сывалма емелсем кирлӗ пулаҫҫӗ.

Тепӗр чух шӑннӑ хыҫҫӑн сикекен чирсем те пуҫланма пултараҫҫӗ. Пӗлмен ҫынсем вӑра ӑна та простудӑ теҫҫӗ. Сӑмахран, йалсенче тиф чирӗсене, вӗсем шӑннӑ хыҫҫӑн пуҫланнӑ пулсан, простудӑ тесе килтех тарлатса сыватма тӑрӑшакансем сахал мар. Анчах кун пек тарлаттарни организма сийен кӑна кӳрет, чир пурпӗрех иртмест, ытлашши тарлани чирпе кӗрешме ҫав тери кирлӗ организм вӑйне кӑна чакарать.

Ҫапла вӑра, простудӑ тӗрлӗ чирсене кайма пулӑшать. Ҫавӑнпа хӗллехи вӑхӑтра унтан, пуринчен ытла вӑй начар ҫынсен, вӑтӑ ҫынсен хытӑ сыхланма тӑрӑшас пулать. Кунта шӑнса пӑсӑлассинчен сыхланнисӗр пуҫне ҫумри микробсемпе кӗрешме кирли ҫинчен те манмала мар. Хӑлха шӑтӑкӗсене, шӑлсене, чӗрнесене, кӗпе-йӗмсене тата ыт. пурне те таса тытас пулать. Уйрӑмӑнах йӗркелӗ (10 кунран кайа мар) мунча кӗрсе тӑмалине манмала мар.

Простудӑ тиесен, малтанхи пулӑшу пек, килте тарласа пӑхни усӑллӑ. Анчах унпа иртмесен, чир малалла аталанса пырсан, текех килте выртма йурамасть, мӗнле чирне пӗлме тата ӑнӑҫлӑн емелленме хӑвӑртрах тухтӑр патне каймалла.

Врач К. Пайраш.

Хасан кӳлли районӗнчи ҫапӑҫу участникӗ Алексейӗв—йалкорсем патӗнче

ТРАК. Районри „Коммунизм ҫулӗпе" хаҫат редакцийӗ пуҫарнипе декабӗрӗн 13-мӗшӗнче стена хаҫат редакторӗсен, йалкорсен, почтальонсен пӗрлешӳллӗ канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Вӑл канашлура 1939 ҫулхи халӑх перепиҫне хатӗрленесе иртересси ҫинчен сӳтсе йаврӗҫ.

Канашлура Хасан кӳлли районӗнчи ҫапӑҫусен участникӗ „За отвагу" медальпе наградӑланӑ Н. Алексейӗв йулташ пулчӗ. Вӑл йалкорсене, стена хаҫат редакторӗсене, Хасан кӳлли патӗнче пулнӑ ҫапӑҫусем ҫинчен тӗплӗн каласа пачӗ.

Ив. Хатаевский.

Колхозри драмкружок

Кӗчкейри (Сӗнтӗрвӑрри р.) колхоз клубӗ ҫумӗнче кӑҫал драмкружок организациленӗ. Кружок лайӑх ӗҫлет. Унта 28 колхозник тӑраҫҫӗ. Ӑна вулав ҫурчӗн пуҫлӑхӗ Московский йулташ йертсе пырать. Художествӑллӑ руководителӗ тата режиҫҫор ӗҫне Маклашкина Ольга туса пырать. Драмкружок ӗҫлеме пуҫланӑранпа „Айдар" пйесӑна 15 хут, „Нарспи" пйесӑна 5 хут лартса панӑ. Айдар рольне Майоркин, Нарспи рольне Маклашкина йулташсем аван вылясса пачӗҫ.

Н. А.

Йалти клубсемпе вулав ҫурчӗсен ӗҫне йӗркелемеле

Хӗллехи вӑхӑтра клубсемпе вулав ҫурчӗсем йал пурнӑҫӗнче уйрӑмах пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Ӗҫсем пӗтӗрнӗ хыҫҫӑн, каҫхи вӑхӑтсенче, колхозниксем, йалти ҫамрӑксем клуба йе вулав ҫуртне пухӑнаҫҫӗ. Ниҫта кайма ҫук пирки мар пырать колхозник йалти культурӑллӑ ҫурта, вӑл кунта ҫӗнӗ хаҫат-журналсем, ҫӗнӗ кӗнекесем тупса вуласшӑн, ҫӗнӗ хыпарсем пӗлесшӗн, хӑй умне тухса тӑнӑ ҫӗнӗ ыйтусене татасшӑн. Социализм строительствинче активлӑн хутшӑнса ӗҫлекен совет гражданинӗ ҫӗршыври, ҫаплах тӗнчери пур пысӑк ыйтусемпе те интересленет. Совет гражданинӗ политикӑллӑ пурнӑҫӑн тулашӗнче тӑрса йулма пултараймасть.

Йалти клубсемпе вулав ҫурчӗсем пӗтӗмпех йалти ӗҫҫыннисен интересӗсемшӗн ӗҫлемеле, вӗсен колхозникпа колхозницӑна хӑйсен политикӑллӑ активлӑхне тата культурлӑхне ӳстерме пулӑшмала.

Клубсемпе вулав ҫурчӗсем—вӗсем совет государстви ӗҫҫыннисем валли организациленӗ паха учрежденисем.

Анчах, каламала, чылай ҫӗрти клубсемпе вулав ҫурчӗсем ӗҫҫыннисем ыйтнине ҫырлахтарса пыраймаҫҫӗ.

Акӑ, И. Алеферӑв корреспондент ҫырса пӗлтернӗ тӑрӑх, Асакассинчи (Елӗк р.) вулав ҫурчӗ йалсовечӗпе пӗр ҫӗрте пулнӑ, халӗ ӑна хӑйне уйрӑм ҫурт тупса панӑ, ҫапах та вӑл хупӑ тӑнинчен усси нимӗн те ҫук. Вулав ҫурчӗ валли ҫырӑнса илнӗ хаҫат-журналсем вулав ҫурт пуҫлӑхӗ шутланса тӑракан Платонӑв аллинчех пӗтеҫҫӗ, вӗсене никам та тытса вулаймасть. Хальхи вӑхӑтра колхозниксем сывхарса килекен халӑх перепиҫӗ ҫинчен пӗлесшӗн, вӗсене ку йенӗпе ӑнлантарса паракан ҫук.

Клубсемпе вулав ҫурчӗсем ҫителӗксӗр ӗҫлени чи малтан вӗсен ӗҫне ҫутӗҫ органӗсем начар йертсе пынинчен килет.

„Йетӗрне районӗнче 20 вулав ҫурчӗ. Анчах вӗсене районри ҫутӗҫ пайӗ начар йертсе пырать. Ҫавна пула, иртнӗ ҫул лайӑх ӗҫленӗ вулав ҫурчӗсем те кӑҫал хӑйсен ӗҫне йапӑхтарса йанӑ. Сӑмахран, иртнӗ ҫул Тури Мучар вулав ҫуртне колхозниксем йуратса ҫӳретчӗҫ, кунта тӗрлӗрен пултарулӑх кружокӗсем ӗҫлетчӗҫ. Кӑҫал кунта пӗр биллиардсӑр пуҫне, урӑх нимӗн те ҫук. Хаҫат-журналсем ҫырӑнса илмен, радио ӗҫлемест. Вулав ҫурчӗн пуҫлӑхӗ Кудрйашов государствӑран пӗр усӑсӑрах шалу илсе тӑрать.

Шӑмат йалсовечӗ тата клуб сийӗнчи тимӗре сӳсе илнӗ те, клуб ҫурчӗ кӗркунне ҫӑмӑр айӗнче ҫӗрсе ларчӗ, халӗ унта кӗме те ҫук сивӗ.

Ҫавнашкалах Иванкӑвӑ, Палтай йалсовечӗсем те вулав ҫурчӗсене ӑшӑтма—вутӑ, ҫутма краҫын тупса паман. Хаҫат-журналсемпе кӗнекесем илме укҫа-тенкӗ памаҫҫӗ.

Районри ҫутӗҫ пайӗнчи культурӑпа ҫутӗҫ инспекторӗ Сеткин кӑҫал вулав ҫурчӗсен пуҫлӑхӗсемпе тӗл пулса калаҫман, вӗсемпе пӗр канашлу та иртермен. Вулав ҫурт пуҫлӑхӗсен заочнӑ вӗренмели курсне салатса йанӑ" тесе ҫырать Н. Цветков корреспондент.

Чылай ҫӗрти вулав ҫурчӗсемпе клубсем, вӗсен ҫумӗнчи библиотекӑсем хӑйсен пуйанлӑхӗсене ӳстерсе пыма тӑрӑшмаҫҫӗ. Уйрӑмах библиотекӑсен хуҫалӑхӗ йӗркесӗр саланса пырать.

Хӗрлӗ Чутай районӗнче Хусанушкӑнь вулав ҫурчӗ 7-мӗш ҫул ӗҫлет, ҫапах та кунта ӗҫҫыннисене валли йурӑхлӑ кӗнеке питӗ сахал.

„Кӑҫалхи бюджет тӑрӑх ҫӗнӗ кӗнекесем 500 тенкӗлӗх илме палӑртнӑ, вулав ҫурчӗн пуҫлӑхӗ Йакимӑв пайанхи куна кӗнекесем 80 тенкӗлӗх ҫеҫ илнӗ, вӗсене те чылайӗшне вырӑнсӑр салатса пӗтерме ӗлкӗрнӗ,—тесе ҫырать Л. З. корреспондент.—Колхоз клубӗ те ҫавнашкалах хӗле хатӗрленмен, вутӑ ҫук, сивӗ. Клубра культурӑллӑ ӗҫе йӗркелес вырӑнне, клевӑр вӑрри тасатаҫҫӗ. Ҫапла хӑтланса йалти ӗҫҫыннисене клубпа вулав ҫуртӗнчен пачах сивӗтнӗ".

Хӗрлӗ Чутай районӗнченех, Уйпуҫӗнчи вулав ҫурт пуҫлӑхӗ Фадейӗв, библиотекӑри кӗнекесемпе хаҫат-журналсене тӗлли-паллисӗр салатса пӗтерни ҫинчен И. Иванов тата Салуйинри хӗрлӗ кӗтес пуҫлӑхӗ Ф. Дубров колхозран пӗр ӗҫлемесӗр кашни кун ҫур ӗҫкунне илсе тӑни ҫинчен Дормидонӑв корреспондентсем ҫырса пӗлтереҫҫӗ.

Уйрӑм вулав ҫурчӗсемпе клубсем хӑйсен ӗҫӗнче радиопа тӗрӗс усӑ курма пӗлмеҫҫӗ. Радиоприйомниксем лартаҫҫӗ те вӗсене часах йапӑхтарса йараҫҫӗ. Кун ҫинчен Йетӗрне районӗнчи Уйкас йалсоветӗнчен Г. Федӑрӑв, Кӗҫӗн Шемертен колхозӗнчен Н. Тимофейӗв йалкорсем ҫыраҫҫӗ. Ҫав йалсенче радиоприйомниксем лартнӑ та халӗ йухӑнтарса йанӑ.

Пирӗн хӑшпӗр колхозра ҫӗнӗ клуб уҫнӑ чух клубӑн пысӑк ӗҫӗсем ҫинчен хӗрӳлӗн калаҫаҫҫӗ, анчах кайран клуб йе пушӑ ларать, йе ӑна ирсӗрлесе пӗтереҫҫӗ.

С. Ваҫилйӗв йалкор ҫырса пӗлтернӗ тӑрӑх, Шӑхасан районӗнчи Уйкас Кипек колхозӗн клубне клуб пуҫлӑхӗ И. Иванов пӗтӗмпех йухӑнтарса йанӑ. Ҫырӑнса илнӗ хаҫат-журналсемпе кӗнекесене, клубри вӑйӑ хатӗрӗсене салатса пӗтернӗ. Клуб ҫумӗнче кӑҫал нимӗнле кружок та ӗҫлемест.

Акӑ тата Тутаркас районӗн центрӗнчи—Мӑн Сӗнтӗрти социализмла культурӑн ҫуртӗнче, каҫсерен ташланисӗр пуҫне, нимӗнле массӑлла ӗҫ те ҫук. Клуб пуҫлӑхӗ Петров йулташ ӑна тӑватпӑр, кӑна тӑватпӑр тенипех вӑхӑт иртерет. Кун ҫинчен пире П. Йаргункин корреспондент ҫырса пӗлтерет.

Йалти культурӑлла-массӑлла политикӑлӑ ӗҫе хаклавӑ ҫӗрте клубсемпе вулав ҫурчӗсем хӗрӳллӗ пурнӑҫпа пурӑнаҫҫӗ. Сӑмахран, „Ишлей районӗнчи Ентимӗркассинче драмкружокпа шавлӑ оркестрӑн ӗҫне лайӑх йӗркеленӗ. Драмкружокра 15 ҫын тӑрать. Йалта спектакльсем лартнисӗр пуҫне, кружок кӳршӗри Иамайкасси, Йанӑм йалӗсене тухса ҫӳрет. Шавлӑ оркестрта—20 ҫын. Оркестр репертуарӗнче 38 тӗрлӗ йурӑ. Ҫак пултарулӑх кружокӗсен ӗҫӗсем колхоз ӗҫӗпе ҫӗршывӑн политикӑллӑ пурнӑҫӗпе ҫыхӑнса пыраҫҫӗ", тесе ҫырать Ошманӗ корреспондент.

Йалти вулав ҫурчӗсемпе клубсен ӗҫне тепрен лайӑхлатса йӗркелемеле. Вӗсем политикӑллӑ агитацин, социализмла культурӑн паха вучахӗсем пулса тӑччӑр. Колхозник хӑйӗн тӑван вулав ҫуртӗнче, клубра пур тӗрлӗ ыйтупа та пур тӗрлӗ справкӑ та илме пултартӑр, кунта вӑл культурлӑ кантӑр, хӑйӗн ӑстӑнне пуйанлатма пултартӑр.

Вырӑнти парторганизацисемпе комсомол организацисем йалти культурӑллӑ-массӑлла, политикӑллӑ ӗҫе вулав ҫурчӗсемпе клубсем урлӑ туса пымала. Ҫутӗҫ органӗсен вулав ҫурчӗсемпе клубсенчен пӑрӑнса тӑмала мар, вӗсен ӗҫне куллен тӗрӗс йертсе пымала.

Кӑҫалхи декабӗрӗн 25-мӗшӗнчен пуҫласа 1939 ҫулхи йанварӗн 25-мӗшне ҫитиччен вулав ҫурчӗсемпе клубсем ӗҫҫыннисем умӗнче отчотсем туса иртереҫҫӗ. Вулав ҫурчӗсен отчочӗсене иртерес ӗҫе партипе совет тата комсомол организацисен пысӑк тимлӗхпе организацилесе, вулав ҫуртне йалта чӑн-чӑн культурӑллӑ-массӑллӑ тата политикӑллӑ ӗҫӗн центрӗ туса хурассишӗн ӗҫлемеле.

„Красное Сормово" савӑтри (Горький хули) производствӑ программине 220 процент тултарса пыракан токӑр стахановӗҫсем.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ (сулахайран сылтӑмалла): А. П. Силантйӗв, А. В. Лаврова, В. И. Шурӑв.

Г. Лычагин фотоӳкерчӗкӗ. (Прессклише).

Хроникӑ

ССРС Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ В. Н. Меркулӑв йулташа ССРС Шалти ӗҫсен Халӑх Комиссарӗн пӗрремӗш заместителӗ пулма ҫирӗплетнӗ.

ССРС Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ М. И. Олонов йулташа Ҫулйӗр халӑх Комиссарӗн политикӑ йенӗпе ӗҫлекен заместителӗ пулма ҫирӗплетнӗ тата ӑна Ҫулйӗр Халӑх Комиссарначӗн Коллеги составне кӗртнӗ.

Парти вӗрентӗвӗн ҫуртӗнче

ПСК(б)П Обкомӗн парти вӗрентӗвӗн тӗп ҫурчӗпе ПСК(б)П хула комитечӗ декабӗрӗн 22-мӗшӗнче „Марксистское понимание роли личности в истории" темӑпа лекци иртереҫҫӗ.

Лекци каҫхине 7 сехетре, парти вӗрентӗвӗн ҫуртӗнче пулать.

Ответлӑ редактӑр Н. М. ҪЕМЕНАВ.

Чи лайӑх литературӑллӑ художествӑллӑ журналсенчен пӗрине

НОВЫЙ МИР

ЖУРНАЛА

КОГИЗ МАГАЗИНӖСЕНЧЕ

ҪЫРӐНСА ИЛМЕ ВАСКӐР

Ҫулталӑкра 12 номӗр. Хакӗ перепльотсӑр 36 тенкӗ, перепльотпа 60 тенкӗ.

КОГИЗ-ӑн Чӑваш республикӗнчи уйрӑмӗ.

ПАРТИПЕ КОМСОМОЛ ОРГАНИЗАЦИСЕНЕ, БИБЛИОТЕКӐСЕНЕ, ТЕХНИКУМСЕНЕ, ВӐТАМ ШКУЛСЕМПЕ ТУЛЛИМАР ВӐТАМ ШКУЛСЕНЕ ТАТА УЙРӐМ ПОДПИСЧИКСЕНЕ ПӖЛСЕ ТӐМА

КОГИЗ МАГАЗИНӖСЕНЧЕ ПУРИНЧЕ ТЕ

ҪАК ЖУРНАЛСЕНЕ ҪЫРӐНСА ИЛМЕ

1939 ҫулшӑн ПОДПИСКӐ ЙЫШӐНАҪҪӖ

Бюллетень марксистско-ленинской литературы—ҫулталӑкра 12 номӗр, хакӗ 7 тенкӗ те 20 пус.

Книжные новости—24 номӗр—12 тенкӗ.

Что читать—12 номӗр—24 тенкӗ.

Ҫак журналсем вуламалли кӗнекесене лайӑхрах суйласа илме тата ҫӗнӗрен пичетленсе пыракан литературӑпа паллашма кирлӗ.

КОГИЗ-ӑн Чӑваш республикӗнчи уйрӑмӗ.

„Сойузкинопрокатӑн" Чӑваш республикӗнчи уйрӑмӗ

ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКӖНЧИ ЕКРАНСЕМ ҪИНЕ

АЛЕКСАНДР НЕВСКИЙ

йатлӑ саслӑ, историлӗ, художествӑллӑ ҫӗнӗ фильм кӑларать.

„Мосфильм" производстви 1938 ҫул.

Сценарий авторӗсем:

П. А. ПАВЛЕНКО тата С. М. ЭЙЗЕНШТЕЙН.

Постановкӑ искусствӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗн С. М. Эйзенштейнӑн тата Д. Ваҫилйӗвӑн.

Ӑслӑ оператӑр — искусствӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗ Эдуард Тиссе. Композитӑр С. Прокофйӗв.

ТӖП РОЛЬСЕНЧЕ

Кньаҫ Александр Йӑрославич Невский—республикӑн тава тивӗҫлӗ артисӗ орденоносец Н. К. ЧЕРКАСӐВ. Васили Буслай—орденоносец Н. П. ОХЛОПКОВ. Гаврило Олексич—А. Л. АБРИКОСӐВ. Игнат—кольчужнӑй мастӑр—республикӑн тава тивӗҫлӗ артисӗ Д. Н. ОРЛОВ. Амелфӑ Тимофейӗвнӑ—республикӑн халӑх артисӗ орденоносец В. О. МАССАЛИТИНӐВӐ. Ольгӑ Новгород хӗрӗ—В. С. ИВАШӖВӐ. Василисӑ—псковитянкӑ—А. С. ДАНИЛӐВӐ. Павша—Псков воеводи—республикӑн тава тивӗҫлӗ артисӗ В. К. НОВИКӐВ. Твердило—Псков воеводи, предатель—республикӑн тава тивӗҫлӗ артисӗ—С. К. БЛИННИКӐВ. Тевтон орденӗн магистрӗ—республикӑн халӑх артисӗ В. Л. ЕРШОВ. Епископ—искусствӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗ Л. А. ФЕНИН. Хура монах—республикӑн тава тивӗҫлӗ артисӗ—Н. А. РОГОЖИН.

Вырӑс халӑхӗн аслӑлӑхӗ, хӑвачӗ тата паттӑрлӑхӗ ҫинчен, вырӑс хӗҫпӑшалӗн мухтавӗ ҫинчен, вырӑс ҫӗрне турта илме хӑтланакансене хирӗҫ пынӑ кӗрешӳре вӗҫӗмсӗр хӑйула пулни ҫинчен калакан патриотла фильм.

Фильм—1242 ҫулта вырӑс халӑхӗ хӑйӗн ҫӗрне, хӑй никама пӑхӑнмасӑр ирӗклӗ пурӑнассине хӳтлеме ҫӗкленни ҫинчен тата ҫав тери йӑвӑр условисенче, Чудски кӳлли ҫинче пулса иртнӗ генеральнӑй паттӑр ҫапӑҫура нимӗҫ захватчикӗ-интервенчӗсене—йытӑ рыцарсене пуҫӗпех ҫӗмӗрсе тӑкни ҫинчен каласа парать.

Уполномоченный Чувашглавлита № 588

Гор. Чебоксары типография № 1 Местпром ЧАССР., заказ № 881 ф. б. 58×84 п. л.